Сергей
Юшков

# Пĕр
# куç
# хупмасăр



С(Чув.)
К Ю-96
22250-чув.

Национальная библиотека ЧР
4-022250

22250 кув

вр К С(Чув.) Ю96

СЕРГЕЙ
ЮШКОВ

# ПĔР КУÇ ХУПМАСĂР

КАЛАВСЕМ

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ.
ШУПАШКАР —
1978

С(Чув)2
Ю 96

Обязат. экз.

ПРОВЕРЕНО
20ю 06 СЕН 2017

22250-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

**Юшков С. П.**
Пĕр куç хупмасăр. Калавсем. Чăваш кĕнеке издательстви. Шупашкар. 1978 ç.

48 с.

Кĕнекери калавсене пĕр тема — вăрçă теми — çыхăнтарса тăрать. Салтаксен вăрçăри паттăрлăхĕ, туслăхĕпе юратăвĕ, вĕсем епле йывăр вăхăтра та пуç усманни произведенисенче тĕп вырăн йышăнать.

Ю $\frac{0763-142}{М\ 136(03)78}$ 78—78

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1978 ç.



# СНАЙПЕР КАЛАВĔСЕМ

Темиçе çул каялла шкул ĕçĕпе ман Патăръел районне каймалла пулчĕ. Виçĕ кунлăх командировка илтĕм те хайхи пĕр илемлĕ ăшă кун çула тухрăм.

Сентябрь уйăхĕн вĕçнелле вĕрене, çăка, хурăн çулçисем сарă пурçăн пек курăнаççĕ, çилсĕр-мĕнсĕрех турат çумĕнчен татăлаççĕ те вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçсе анаççĕ, сарă лĕпĕшсе аса илтереççĕ.

Çăмăл машина малалла хăвăрт вĕçтерет. Манпа юнашар пĕр утмăлалла çывхарнă çын ларса пырать. Ун кăкăрĕ çинче орденпа медаль паллисем шăкăри нумай. Вăрçă ветеранне Танталов, Микуш Палли, тесе чĕнеççĕ-мĕн. Пысăк та хăмăртарах куçĕсем кăмăллăн пăхаççĕ. Çирĕп шăнăрлă, тĕреклĕ аллисем хулçурăмра вăй-хал пуррине палăртаççĕ. Çураласса вăл Çĕпрел районĕнче çуралнă, колхозра бригадирта ĕçленĕ. Районти чи лайăх сунарçăсенчен пĕри шутланнă. Вăрçă пуçлансан, вăл хăй ирĕкĕпе фронта васканă.

Микуш Палли сăмахлама юрататакан çын пулчĕ. Те

çул кĕскелтĕр тесе, те юнашарти пĕр тӳрккес каччă хăлхине кĕтĕр тесе, вăл мана çапăçури хăшпĕр ĕçĕсемпе паллаштарма тытăнчĕ. Хам та, вăрçă нуши-мыскарине çителĕклех курнăскер, ватă салтак калавĕсене хапăл тусах итлерĕм.

## Пакет

— Ку вăл Калинин фронтĕнче 1942 çулта пулса иртрĕ,— пуçларĕ Танталов хăйĕн калавне.— Пирĕн часть, каялла чакса, Çамрăк Туд ятлă шывăн икĕ енĕпе те оборона йышăнчĕ. Анатарах, пĕр çур çухрăмра, эпир аркатма ĕлкĕреймен çĕнĕ кĕпер пурччĕ. Фашистсем унтан леререх чарăнса тăчĕç. Çапла çĕнĕ кĕпер «нейтральнăй» текен тăрăха юлчĕ.

Çамрăк Туд шывĕ сарлаках мар, çыранĕсем вара самаях чăнкă. Унăн сулахай енче хăва ашкăрса ӳсет.

Фашистсен штабĕ сылтăм енчеччĕ. Хĕвел анса тĕттĕмленсен, çак кĕпер урлă пĕрмаях каçса çӳретчĕç: штаб хучĕсене сулахай çыран хĕрринчи батальонсене çитерме васкатчĕç, хĕçпăшал тиенĕ машинăсем çутă çутмасăр иртетчĕç. Каялла вара аманнă салтакĕсене тиесе тухатчĕç. Кĕскен каласан, фашистсем пирĕн сăмса умĕнчех кĕперпе усă куратчĕç.

Пĕррехинче батальон командирĕ Сакмаров капитан мана хăй патне чĕнчĕ.

— Эсир, Танталов юлташ, питĕ тĕл перекен сержант,—терĕ вăл.— «Нейтральнăй» текен тăрăхри кĕпер урлă пĕр фашиста та каçма памалла мар. Кĕпер çывăхнерех фашистсем асăрхамалла мар вырăн йышăнмалла пулать. Эсир вĕсене курса тăрăр, вĕсем ан курччăр. Ыран каçхине сире ылмаштарма тепĕр снайпер пырĕ. Халĕ çула тухма хатĕрленĕр. Пĕр талăклăх çимелли илĕр, пемелли те çителĕклĕ пултăр.

...Таврана каç тĕттĕмĕ çапнă май вăрçă шавĕ те лăп-

ланчĕ. Вунă зарядлă снайпер винтовкипе пĕр сумка патрон, тăватă «лимонка», ĕçме-çиме илтĕм те взводри юлташсемпе сывпуллашса уйрăлтăм. Сунара тухнă тилĕ пек йăпшăнса, Çамрăк Туд хĕррипе шăвататăп. Тапхăр-тапхăр чарăнса тăрса тавралăха сăнатăп: ăнсăртран фашистсен разведки тĕлне пуласран асăрханатăп. Акă пĕлĕтелле симĕс, кĕрен ракетăсем çиçсе хăпарчĕç. Эпĕ курăк хушшине хытăрах лăпчăнатăп та ракетăсем сӳниччен вырăнтан та хускалмастăп. Тĕттĕмленсен, каллех кĕпер патнелле васкатăп.

Пĕр çӳçе хыçĕнче майлă вырăн тупрăм та хама валли «каюра çулĕ» алтрăм. («Г» саспалли евĕр алтнă окопа снайперсем «каюра çулĕ» теççĕ.) Ларма çемçе пултăр тесе, курăк татса сартăм. Тăшман разведки куçĕнчен сыхланас шутпа, окоп çине çӳçе хуллисем каса-каса хутăм. Хама кĕрсе тухма ансăр хушă хăвартăм. Тăшман салтакĕ сывăхран иртсе каяс пулсан та ман окопа асăрхаяс çук.

Кĕпер таврашне сăнама тытăнтăм. Халлĕхе унта нимле чĕрчун та курăнмасть-ха. Тапхăр-тапхăр кăна сывлăшра ракетăсем çуталса каяççĕ. Çук, куç тĕлне каллех нимĕн те тухмасть.

Чылай выртрăм. Çапла, сисмен те, кунĕпе ĕшеннĕскер, тĕлĕрме пуçланă. Хăлхана мотор сасси кĕнипе сасартăк вăранатăп та кĕпер çине тинкеретĕп. Улăхра шурă тĕтре. Вăхăт ир еннелле сулăннă. Шурăмпуç килет. Сасă кунталла çывхарать. Мотоцикл акă кĕпер çинех вашлаттарса кĕчĕ. Ун çинче икĕ мĕлке палăрать. Эпĕ руль тытса пыраканнине тĕллетĕп. Фашист çавăнтах каялла сирпĕнсе юлать. Мотоцикл хăй хăвăртлăхĕпе пырать-пырать те темле шăтăка çитсе ӳпĕнет. Хыçалта ларса килекенни мотоцикл ӳпĕниччен сикме ĕлкĕрет, тарма хăтланать — пуля ăна та çапса антарать.

Эпĕ тĕмĕ хушшинчен тухса окопа чăмма ĕлкĕртĕм çеç — вут-çулăм тăкăнма тытăнчĕ. Минăсем ман çывăхри çĕр питне сĕвеççĕ. Çур сехет хушши кисренсе тăчĕ тавралăх. Эпĕ «каюра шăтăкне» кĕрсе выртнипе вилĕмрен

хăтăлтăм. Пĕри окопах лекрĕ. Ну, кисретрĕ те вара! Сăмсана йӳçĕ тар шăрши пырса кĕчĕ, чыхăнтарса ячĕ. Пĕтрĕм пуль терĕм. Пите-куçа хыпашласа пăхатăп — нимех те пулман.

Çанталăк уяртрĕ. Сарă хĕвел йăваш ача пек кулса ячĕ. Окоп тĕпĕнче выртнă çĕртех сухари кăшлакалатăп. Выçă хырăма сухари те кулач пекех çав. Унтан флягăран пĕр-икĕ сыпкăм шыв сыпатăп та тăрса тăшман енне стереотрубапа пăхатăп. Нимĕçсем хăюлланнă. Унта та кунта курăнаççĕ.

— Эхе, хĕвел питне хĕртĕнме тухрăр пулать! Паçăртанпах кĕтеп,— тетĕп ăшăмра, винтовкăпа вĕсене тĕлленĕ май. Умлă-хыçлă шĕкĕлчеме тытăнтăм. Виççĕшне çавăнтах тĕп турăм, анчах тăваттăмĕшне пеме ĕлкĕреймерĕм, кăвак каска траншейăна вĕлт! çеç пытанчĕ.

Ун хыççăн каçчен те фашистсем пуçĕсене кăтартмарĕç, çывăхрах совет снайперĕ хуралланине ăнланчĕç пулас.

Çĕр питĕнче каç тĕттĕмĕ хуçаланма тытăнсан, тăхлан кучченеçĕ активнĕ фашистсем патне çитсе пăхма шутларăм. Окопран хуллен тухрăм та çыран хĕррипе шăватăп. Кĕпер те инçе мар. Сасартăк юханшывра тем шăмпăртатни илтĕнчĕ, анчах Çамрăк Туд çыранĕ çӳллĕ пирки аялта мĕн сас тунине курма çук. Эпĕ каллех çыран хĕрринчи тĕмĕ хыçне выртатăп та сасă тăвакана шырама тăрăшатăп. Кĕçех кунталла кимĕ çывхарнине асăрхатăп. Нимĕçсем, каç тĕттĕмĕпе усă курса, сылтăм енчи позицие темле хыпарпа килеççĕ пулмалла. Кимĕ çыран хĕрне пырса перĕнсенех ларса пыракансем йăлт-йăлт сиксе тухма тапратрĕç. Эпĕ çумри «лимонка» вĕçертсе илетĕп те çаксем çине вăркăнтаратăп. Тăваттăшĕ çавăнтах сывлăша ывтăнчĕç, пĕри тĕмĕсем хушшине сикме ĕлкĕрчĕ. Кимĕçĕ каялла каçма тăнăччĕ те — ман пуля ăна та самантрах хуса çитрĕ, кимĕ тĕпне çавăрса пăрахрĕ.

Пĕр тапхăр хускалмасăр выртрăм, тĕмĕсем хушшине пытаннă автоматчика асăрхама тăрăшрăм. Никама та курмарăм.

«Куян пекех тарнă пулас, нимле сас-хура та çук»,— шухăшлатăп ăшăмра. Вара аялалла шăвăнса антăм. Хайхи фашист виллисем патне çитрĕм. Пĕри унтер-офицер. Çумĕнчи планшетне вĕçертсе илтĕм, браунингне те хăвармарăм. Ыттисен — автоматсем. Вĕсене те пухса çĕклерĕм те çыран тăрăх хамăр батальона васкарăм. Юлташсем хавассăн кĕтсе илчĕç.

— «Туссем» патĕнче мĕнле «хăналантăн»? — теççĕ.

Траншейăна çитсе ÿкрĕм çеç — фашистсем эп пулнă вырăна минометпа тустарма тытăнчĕç. Татти-сыпписĕр печĕç. Тĕмĕсем хушшине сикнĕ фашист çитсе пĕлтернĕ ĕнтĕ, тесе шухăшларăм ăшăмра. Юлташсем патĕнче тытăнса тăмарăм, тÿрех Сакмаров капитан патне васкарăм. Унăн блиндажĕ малти линирен пĕр икçĕр метр хыçарахчĕ. Эп çитнĕ чухне Сакмаров капитанпа унăн адъютанчĕ сĕтел çинчи карттă умĕнче тем тăрмашатчĕç, хĕрлĕ кăранташпа йĕрсем тăватчĕç. Мана курсан, вĕсем ĕçе пăрахсах тÿрленсе тăчĕç. Эпĕ, çар уставĕнче хушнă пек, задание пурнăçлани çинчен пĕлтертĕм, унтер-офицер планшетне тыттартăм.

— Ман шутпа,— терĕ капитан кăмăллăн,— пуринчен ытла çакă чи хакли. Ăна халех штаба илсе каятăп.

Тепĕр кунне çакна пĕлтĕм: эпĕ илсе килнĕ пакетра фашистсен чаçĕсем июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне пирĕн фронтра мĕнле вырăнсене йышăннине, пемелли хатĕрсене ăçта вырнаçтарса лартнине, боеприпас склачĕсен тĕлне, аэродромсене кăтартакан план-карттă пулнă. Пирĕн командованишĕн çав тери хаклă документ. Темиçе разведчик ĕçне пĕччен тунăшăн, мана Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илме тăратрĕç, фронтри хаçатра мухтаса çырчĕç.

Микуш Палли сăмахне пĕтерчĕ те пирĕн çине пăхса илчĕ. Унтан, леш чăрсăр каччă та хăлхине тăратсах итленине хавхаланса, сăмахне малалла тăсрĕ.

# Фриц сăнĕ

Çанталăк кĕр енне сулăннă май каçсем те вăрăмланчĕç, ир енне сивĕ сывлăм ӳкекен пулчĕ. Вăрманти йывăç çулçисене кĕрен тĕс çапрĕ. Пирĕн дивизи татти-сыпписĕр çапăçусенче пулнă хыççăн канма тухрĕ, пулеметчиксемпе резерври салтаксене малти линие хăварчĕ. Нимĕçсен те малтанхи пек тапăнса кĕрес хăвачĕ чакнăччĕ. Ытларах хăйсен позицине тытса тăма тăрăшатчĕç, анчах пур чухне те ĕçĕ ăнмастчĕ — пирĕн чаçсем вĕсене ăçта кирлĕ унта тапăнса каялла чакаратчĕç.

Малти позицие юлнă пулеметчиксен пĕр взводне Скворцов хушаматлă чăваш лейтенанчĕ ертсе пыратчĕ. Хăюллă та çивĕч командирччĕ. Тем тĕрлĕ мыскара та шутласа тупатчĕ вăл.

Пĕр каçхине мана хăй патне чĕнчĕ те:

— Фашистсене интереслĕ задача парăпăр,— терĕ.— Пĕлетĕн ĕнтĕ, Гитлера вĕсем турă вырăннех хураççĕ. Курăпăр, чăннипех юратаççĕ-и вĕсем ăна е çук-и.

— Мĕнле майпа? — кăсăклантăм эпĕ.

Хуравласа та тăмарĕ лейтенант — блиндажа кĕрсе пысăк фанера çĕклесе тухрĕ, унăн пĕр енне Гитлер сăнне ӳкернĕ, карикатура мар, чăн-чăн фюрер сăнĕ...

Тĕттĕмленсе çитсен, Егоров снайперпа иксĕмĕр задание тухрăмăр. Тӳпере тачка çумăр пĕлĕчĕсем шăваççĕ. Тапхăр-тапхăр фашист пулемечĕ сассине парать. Сăхă пульăсем шăхăра-шăхăра пирĕн еннелле вĕçеççĕ. Эпир куклене-куклене пыратпăр. Акă пралук карта патне çитрĕмĕр, ун çӳллĕшĕ икĕ метра яхăн. Хамăрăннисем виçĕ кун каялла кăна тунăччĕ ăна. Хамăр валли окопсем чаврăмăр. Кăшт маларах Гитлер портретне çакрăмăр.

Майĕпен тул çутăлма пуçларĕ, хĕвелтухăç кĕренленчĕ. Кĕçех хĕвел тухса сарăлчĕ, кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Эпĕ мала вырнаçтарнă бензин кĕленчисенчен пĕрне тĕллерĕм те винтовкăран çатлаттартăм, лешне çавăнтах вут хыпса илчĕ. Çав вăхăтра сулахай алăпа консервă банкине карăн-

тарнă пралука туртса шатăртаттартăм, автоматпа пенĕ евĕр сас тума тăрăшрăм. Егоров та ман пекех хăтланма тытăнчĕ.

Гитлеровецсем урлă-пирлĕ чупкалама пуçларĕç, траншейăран пуçĕсене çĕкле-çĕкле пăхаççĕ. Карта çумĕнчи Гитлер сăнне кураççĕ те куçне-пуçне чарса пăрахаççĕ, пеме те аптăраççĕ.

Çав самантра Егоровпа иксĕмĕр вĕсене шĕкĕлчеме тытăнатпăр, пĕрин хыççăн теприне персе ӳкеретпĕр. Совет снайперĕсем фюрер портречĕ хыçне пытанса переççĕ, терĕç пулмалла фашистсем. Вара, тарăхса кайнăскерсем, ăна-кăна пăхса тăмарĕç, пулемет-автоматсенчен çунтарма тытăнчĕç, Гитлер сăнне самантрах ала пек туса хучĕç.

Эпир хырăма тытса кулатпăр. Кулмасăр, тăшман салтакĕсем хăйсен фюрерне те хĕрхенмерĕç те...

## Паттăрлăх

Пирĕн çарсем хамăр çĕршыв чиккине тухасси инçех юлманччĕ. Эпир çурхи çулсем епресе кайнипе вăхăтлăха пĕр поселок патĕнче чарăнса тăтăмăр, шкул çуртне вырнаçрăмăр. Фашистсем хуçаланнă чухне кунта казарма пулнă, совет çарĕсем хăвăрт çитнипе фашистсем вăрçă хатĕрĕсене те илсе кайса пĕтерейменн. Унта та кунта пулеметсем, автотягачсемпе грузовиксем ларатчĕç.

Кăнтăр апачĕ хыççăн лейтенант мана хăй патне чĕнсе илчĕ, «нейтральнăй» тăрăхра тăшман мĕн тунине сăнама хушрĕ.

Каçĕ лăпкă. Уйăх тухманччĕ-ха. Тăшман хăйне нимпе те палăртасшăн марччĕ. Ытти чухнехи пек, таврана ракетăпа та çутатмастчĕ.

Акă эпĕ никамăн мар тăрăхра, хамăн окопра. Вăхăт майĕпен шăвать. Çавна май, шухăшăн çăмăл çуни çине ларса, таçта та çитетĕп, атте-аннене, йăмăка, савнă Зинăна аса илетĕп...

Кĕçех нӳрĕ çĕр çине начăрт-начăрт! туса пуснисем илтĕнсе кайрĕç. Эпĕ куçа сăтăркаласа илтĕм те тинкерсе пăхатăп: фашистсен ушкăнĕ, 10—12 çын, пирĕн еннелле килет-мĕн. Малтисем утнăçемĕн чарăна-чарăна тăраççĕ, тимлĕн итлеççĕ, унталла-кунталла тинкереççĕ. Хыçрисем, кайăк хурсем пек, умлăн-хыçлăн параççĕ. Пĕри хулпуççи урлă ручной пулемет çакнă, ыттисем — автоматсемпе. «Нимĕç разведчикĕсем. Пирĕн позицие тĕрĕслеççĕ. Тен, «чĕлхе» тытса тавранасшăн»,— вĕçсе иртрĕ шухăш. Вĕсене пĕрерĕн шĕкĕлчес килсе кайрĕ, анчах васкама юрамасть, пĕр çĕре пухăнасса кĕтмелле.

Акă вĕсем аллă-утмăл метр пек куçса килчĕç те пĕр çĕре пухăнса тăчĕç: малалла мĕн тăвасси çинчен унтер-офицерĕ ăнлантарма тытăнчĕ пулас, поселок еннелле аллипе тăсса кăтартрĕ, унтан сылтăм еннелле пуçне сулса илчĕ. Ыттисем вăл кăтартнă çĕрелле пăхаççĕ.

— Çитет. Кая юлсан, каю шăтать. Халех апатлантаратăп, хырăмăрсем выçрĕç пулĕ. Юнлă аттăрсемпе таса çĕре тек вараласа ан çӳрĕр! — терĕм те çак ушкăна автоматпа шатăртаттартăм. Пиллĕкĕш-улттăш тӳрех тăсăлса ӳкрĕç, ыттисем çĕре выртрĕç.

Эпĕ хама асăрхама памастăп, пеме пăрахатăп та пуçа окопа чикетĕп. Çапах та пĕри асăрхарĕ те лапамрах вырăна чăмрĕ. Унччен те пулмарĕ — мана автоматпа çунтарма тытăнчĕ. Пульăсем окоп çийĕпех шăхăрса иртеççĕ. Пĕр хушă персен, вăл чарăнчĕ. Мана пĕтертĕм терĕ-ши е чееленет-ши?

Пуçа ватсах шухăшлатăп, ăна тытма тĕрлĕ вариантсем тăватăп. Каскăна винтовка шомполĕ çине лартатăп та хуллен кăна çĕклетĕп. Пĕр минут иртрĕ, иккĕ... перекен çук. Сасартăк анăçран, тăшман позицийĕ енчен, чăнк! тутарчĕ. Эпĕ çавăнтах каскăна антаратăп. Ăна икĕ тĕлтен шăтарнă. Кам? Паллах, тăшман снайперĕ. Йывăра лекнĕ разведчика пулăшма килнĕ ĕнтĕ. Чун çӳçенсе илчĕ. Халĕ манăн вилнĕ пекех пулмалла.

Тул çутăлса çитрĕ. Кăвак тӳпере, пирĕнтен инçех те

мар, пимрен шиклешмен хастар тăри сывлăшра çакăнса тăрса юрлать. Çын пек ăнлапас пулсан, вăл çак вырăнта хăйне мĕнле тискерлĕх кĕтнине тӳрех асăрхĕччĕ. Кайăк чунĕ ăна-кăна туймасăр çурхи çанталăк илемĕпе киленет.

Чылай хушă шăрантарчĕ тăри хăй юррине. Хĕвел ăшши окопа тӳррĕн ӳкнипе ăшăнса ĕнтĕркенĕскер, эпĕ тĕлĕрме пуçлатăп. Куç хупаххисене темле сăтăрсан та, хăйсемех хупăнаççĕ.

Сасартăк пирĕн енче пулемет шатăртатма тытăнчĕ, сывлăшра пульăсем шăхăраççĕ кăна.

Эпĕ стереотрубапа пăхатăп та тăшман енче нимех те асăрхамастăп. Пĕр самант печĕç те, тавралăх каллех шăпланчĕ.

Эпĕ каçалапа окопран шăвăнса тухатăп та унталла-унталла асăрханса пăхатăп, анчах хĕрĕх-аллă метртан аякри курăнмасть: тĕттĕмленнĕ.

Нимĕç разведчикĕсен виллисем патнелле шăватăп. Лапамра выртакан чĕрĕ разведчик пирки шухăшласан, çанçурăм тăрăх сивĕ чупса иртет.

Çапах та, шиклене-шикленех, малти вилесем патне шуса çитрĕм, автомачĕсене илтĕм те лапамалла пăхрăм. Нимĕç разведчикĕ выртни палăрать. Унталла упаленетĕп. Винтовкăна хатĕр тытатăп. Пемест-ха. Вилмен пулас, пеме кирлĕ-çке. Çук, вилмен вăл.

Акă фашист хускалса илет те эпĕ пеме хатĕрленнине асăрхать. Пурпĕрех автоматне тытма васкамасть.

— Рус, ан перĕр! Эпĕ аманнă. Хăтарăр!— тет вăл чĕтрекен сасăпа.

Совет салтакĕ юнпăн çунмасть, тăшман парăнать пулсан, ăна пĕтермест.

Нимĕç разведчикĕ çĕрте выртакан автоматне аяккалла пăрахать те аран-аран тăрса ларать, сулахай аллине çĕклет, сылтăмми патак пек çакăнса тăрать.

Эпĕ ун çумне кукленсе ларатăп.

— Пулăшмалла-и?

— Сирĕн ирĕк... Хам çыхкаларăм та... Ыратать.

— Сана хампа пĕрле илсе кайăп, унта часах сиплеççĕ,— тетĕп çакскерне.

— Фашист тесе вĕлермĕç-и?

— Çук, тыткăна хăй ирĕкĕпе парăнакансене тивместпĕр.

— Эпĕ салтак, рабочи ывăлĕ, атте те антифашист пулнă...

— Апла сан ним хăрамалли те çук. Кайрăмăр.

Разведчика пилĕкĕнчен çĕклесе тăрататăп та, сулахай хулĕнчен тытса, лапамран илсе тухатăп.

Кĕçех эп ăна батальон командирĕ патне илсе çитертĕм. «Чĕлхе» тытса килнипе пĕрлех тăшман разведкине тĕп тунăшăн мана тав турĕ капитан. Аманнă нимĕç салтакне полк штабне ăсатрĕç.

☆



# ПĔР КУÇ ХУПМАСĂР

Хаяр вăрçă кĕрлеме пуçлани акă ĕнтĕ тăваттăмĕш çула кайрĕ. 1944 çулхи июнь вĕçĕнче пирĕн çарсем Витебск хулине ирĕке кăларассишĕн кĕрешрĕç.

Ун чухне хула çумĕнчи Двина шывĕ урлă хывнă пысăк кĕпер тăшман аллинчеччĕ-ха. Хулине хăйне те фашистсенчен тасатса çитерейменччĕ-ха. Анчах та тăшман ĕмĕрĕ сехетсерен кĕскелсе пыратчĕ. Пирĕн харсăр салтаксем çурт хыççăн çурт илсе малаллах каятчĕç. Шăп çак самантра мана, снайпера, батальон командирĕ Маклашкин капитан хăй патне чĕнтерчĕ. Вăл ишĕлсе аннă пĕр чул çурт путвалĕнче вăхăтлăха вырнаçнăччĕ.

Эпĕ кирпĕч ванчăкĕсем урлă каçса путвала антăм, тимĕр алăкне уçрăм — шалтан Блохин сержант васкаса тухать. Маклашкин капитан, çўллĕскер, тăрăхла питлĕ те типшĕмрехскер, мана курсан, Блохин сержанта тăхтама хушрĕ, чарăнса тăмасăрах çапла пĕлтерчĕ:

— Кĕçĕр эсир Двина урлă хывнă пысăк кĕпер патне кайса выртатăр та тăшман снайперĕсене тĕп тăватăр.

Пирĕн саперсене çав кĕпере фашистсенчен тасатма пулăшатăр. Саперсене Блохин сержант ертсе пырать. Ăнлантăр-и? Ыйтусем пур-и?

Задание пурнăçлама хатĕррине пĕлтертĕм те эпĕ кайма ирĕк ыйтрăм.

— Капитан пире, саперсене, шансах çитермест пулмалла, чаплă снайпер хушса пачĕ,— терĕ Блохин сержант, путвалран тухсан.

— Капитана лайăхрах курăнать пулĕ,— терĕм эпĕ ăна хирĕç.— Мĕн, эсир уншăн кăмăлсăр пултăр-им?

— Чипер калаçăр-ха... Ăçтан кăмăлсăр пулан уншăн!— мана хулпуççирен хуллен çапса илет сержант.

Ишĕлсе пĕтнĕ çуртсем патĕнчен иртетпĕр. Урам урлă каçма çук: пульăсем шăхăрса вĕçеççĕ. Пирĕн вара хăвăртрах саперсем вырнаçнă вырăна çитмелле. Блохин мана хулран тытрĕ.

— Малтан эпĕ чупса каçатăп, леш енне çитсе ӳкейменсен, саперсене хăв ертсе кайăн. Задание пĕлетĕн,— терĕ вăл, малалла иртсе. Эпĕ ишĕлчĕк çурт çумĕнчен урам ик енне те тинкеретĕп: пульăсем шăхăра-шăхăра иртеççĕ, анчах ăçтан пенине ниепле те асăрхаймастăп. Тем вăхăтран урам шăпланчĕ. Куратăп: Блохин тепĕр енне каçса ӳкнĕ, ал сулать. Тепре пеме пуçличчен чупса каç, тет ĕнтĕ. Темиçе утăм та тăвайманрăм — каллех пеме пуçларĕç, часах пуçри каска чанклатрĕ, телее, пуля ăна шăтараймарĕ. Блохин патне çитсенех, ним каличчен малтан, каскăна хывса пăхрăм — самаях шăйрăннă.

— Асăрхарăм,— терĕ сержант, анчахрах эпĕ мĕн тери ысăк хăрушлăхра пулнине туйса илсе,— вă-ăн, çав виçĕ хутлă çуртăн çӳлти хутĕнчен переççĕ. Фашистсен снайперĕсем-ши?

— Çӳлти хутран? «Калаçасчĕ-ха» апла вĕсемпе, каскăшăн тавăрасчĕ.

Сержант асăннă сарă çурт кунтан лайăх курăнать. Çӳлти хутраултă чӳрече. Пурте ванса пĕтнĕ, хăшĕн-пĕрин кăна аял енчи çуршар кантăкĕ юлнă. Кĕçех сулахаярахра

иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш чӳрече рамисем ҫинче автомат е винтовка выртнине курах каятӑп. Ҫак самантра шӑпах урам урлӑ виҫӗ боец чупса каҫатчӗҫ. Чӳречесенчен каскӑсем курӑнчӗҫ, ҫӑт-ҫат! тени илтӗнсе кайрӗ. Пирӗн пӗр боец урам варринчех тӗшӗрӗлсе анчӗ, тепри — мӑйне аллипе ярса тытрӗ.

Нимӗҫсем переҫҫӗ!

Иккӗмӗш чӳречери каска ҫине тӗллерӗм те... Малтанхи пульӑпах йӑвантартӑм ӑна, унтан — тепӗр чӳречери фашиста...

— Эх, лайӑх шӗкӗлчетӗн! Маттур, Танталов! — пӑшӑлтатрӗ Блохин кӑмӑллӑн. — А¯лу пит тӳрӗ — нихӑшне те вӗҫертмерӗн... Чӑнласах маттур снайпер пачӗҫ иккен пире. Аптрамастпӑр апла.

— Мухтанмалли ҫук. Снайпер тивӗҫӗ вӑл, — тесе алӑ султӑм та, унпа иксӗмӗр саперсем патне утрӑмӑр.

Хула хӗрне пӗр пӗчӗк ишӗлсе пӗтнӗ урампа тухсан, пире хуралти отряд тытса чарчӗ, Блохин ӑҫта ҫул тытнине ӑнлантарсан тин ирттерсе ячӗ.

Тепӗр ҫухрӑмран, окопсем курӑнса кайрӗҫ. Унта — пирӗн пехота. Окопра пӗр тапхӑр чарӑнса тӑтӑмӑр. Двина урлӑ хывнӑ кӗпере лайӑхах куратпӑр ӗнтӗ. Халлӗхе вӑл нимӗҫсен аллинчех-ха. Разведка ярса пӗлтӗмӗр: фашистсем кӗпер таврашне ҫеҫ сыхлаҫҫӗ. Саперсем ҫавӑнпа та икӗ ушкӑна пайланчӗҫ те чугун ҫулӑн икӗ енӗпе Двина шывӗ еннелле хырӑмпа шурӗҫ.

Ҫав ҫултан инҫех мар — бомба шӑтӑкӗсем. Мана пулӑшакан Тулаев ҫыхӑнуҫӑна эпӗ:

— Хырӑмпа шуса унта ҫитме тӑрӑш, майлӑ пулсан, эпӗ те пыратӑп: кӑчӑк турт кӑна, — терӗм.

Яштака та патвар каччӑ пуҫ сӗлтрӗ те окопсем еннелле шӑвӑнчӗ. Кӗҫех хӗвел те анса ларать ӗнтӗ. Ӑшӑ.

Тулаев маттур, ҫурӑмӗ ҫинчи япала миххи кӑна вӑл курӑк хушшипе шунине систерме пултарать — ытти енчен хӑйне ҫӗр метртан та асӑрхаяс ҫук. Ҫийӗнчи гимнастеркипе йӗмӗ ӳсекен курӑкпа пӗр тӗслӗ.

Эпĕ кĕпер енчен ăна кам та пулин перессе кĕтсе выртатăп. Акă, вăл малтанхи бомба шăтăкĕ патне шăвăнса çитрĕ те шалалла пăхрĕ. Çук, унта ăна килĕшмерĕ-тĕр, шăтăкран тухрĕ те малалла шума тытăнчĕ.

Самолетсем кĕрлени илтĕнчĕ. Нимĕçсем! Анăçран килеççĕ. Витебск çине бомбăсем пăрахма, хăйсен «миххе» лекнĕ çар чаçĕсене пулăшма. Анчах та Витебск хули патне çитеймерĕç — вĕсене хирĕç пирĕн «яксем» сывлăша çурса тухрĕç. Пирĕнтен çурçĕртерехре тӳпере çапăçу пуçланса кайрĕ.

Нимĕçсен хăшпĕр çăханĕсем кăна Витебск çине вĕçсе çитме пултарчĕç, е, хура йĕр хăварса, çĕре тăрăнчĕç, е, мала иртме çуккипе, «лавĕсене» çавăнтах пушатрĕç: чугун çулпа шоссе çине бомба тăкăнчĕ кăна. Çĕр кисренчĕ. Юрать-ха, Тулаев шăтăка çитсе ӳкме ĕлкĕрчĕ. Хам та канавра пуç çĕклеме те шикленсе лăпчăнса выртрăм. Сасартăк хыçра нимĕçле калаçни илтĕнсе кайрĕ. Мĕн ку! Пуçа пăрса пăхрăм: виçĕ нимĕç летчикĕ пĕр шикленмесĕр чугун çул тăрăх кĕпер еннелле васкаса чупаççĕ. Двина тепĕр енне каçса ӳкесшĕн ĕнтĕ. Мĕн тумалла? Ман хускалма юрамасть, асăрхасан — пĕтрĕм, тен, капла лăпчăнса выртсан, асăрхамĕç?

Чун ура тупаннех çитрĕ. Хăйхисем ман тĕле чупса çитрĕç, ура сассисем кĕçех маларахра илтĕнчĕç. Тинех çăмăллăн сывласа ятăм. Мана вĕсем е вилнĕ тесе шутларĕç, е курмарĕç. Халĕ пуçа çĕклеме те юрать. Шутланă пекех, фашистсем васкаççĕ. Унталла-кунталла пăхас-căнас шухăш мар вĕсен, кĕпер урлă каçса тармалла. Винтовкăна алла илтĕм çеç, тăр-тăр-тăр! илтĕнсе кайрĕ. Тулаев бомба шăтăкĕнчен пуçне кăларнă та ирсĕрсене перет-мĕн. Иккĕшĕ çĕре тăрăнчĕç, виççĕмĕшĕ — хăтăлчĕ, чугун çул тепĕр енĕпе мулкач пек ыткăнчĕ.

Ăна тартма юрамасть. Кĕпере сыхлакан фашистсене вăл пирĕн çинчен систерĕ, лешсен сыхлăхĕ те вара ӳсĕ. Эпĕ хăвăрт шуса чугун çул урлă каçатăп та хура рельс çумне тăсăлса выртатăп.

Снайпер винтовкине майлаштарса хуратăп. Хайхи нимĕç летчикĕ манран виççĕр метр ытла тарма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Тепĕр икçĕр метр чупсан, кĕпер çине çитсе кĕрет — вара персе тивертме те хĕн.

Винтовкăпа тĕллерĕм çеç — вăльт пăрăнчĕ те çĕре персе анчĕ. Мĕн пулчĕ? Юри хăтланать-и е эп перессине чунĕпе сисрĕ?

Çав вăхăтра хыçра кăшăртатни илтĕнех кайрĕ — пăхатăп: Тулаев мана шыраса çӳрет-мĕн.

— Виççĕмĕшне тартрăмăр-и?— ыйтрĕ вăл ман çума çитнĕ-çитмен.

— Çук, тарса ӳкеймен-ха. Тăрасса кĕтетĕп.

— Апла пулсан, юрать-ха, ĕçе йăлтах путлантарас марччĕ.

Тулаев пăлханать. Мана вăл шансах каймасть пулас. Çак таранччен снайпер алли чĕтременччĕ те — халĕ темле ĕнтĕ.

Нимĕç летчикĕ яшт сиксе тăчĕ те каллех чупма пуçларĕ. Инçех каяймарĕ, тĕллесе петĕм те, хайхи летчик, пуçран пуленккепе çапнăн, малалла сирпĕнсе кайрĕ, курăнми пулчĕ.

— Çав кирлĕччĕ ăна!— савăнса калаçрĕ Тулаев. Ăна саперсен командирне Блохин сержанта шыраса тупма, хамăр ăçтине пĕлтерме хушрăм. Хам бомба шăтăкне вырнаçрăм.

Çур сехет иртсен тин каялла шăвăнса çитрĕ вăл. Шурса кайнă, тути чĕтрет.

— Амантрĕç... Кĕпертен тăвалла икĕ юпа лараççĕ, çавăнтан, мур, çатлаттарчĕç.— Каскине хывнă чух çӳçенсе илчĕ, çӳçĕ юнланнă. Пуля, каскăран тивсе, пуç тирне самаях шăйăрса хăварнă.

Бинтпа вата кăларатăп та аманнă вырăна çыхса яратăп, çыххи тăтăр тесе пуçне каллех хăйĕн каскине тăхăнтартатăп.

— Блохина тупрăм,— пĕлтерчĕ Тураев, тав туса,— пире çакăнтах пулма, кĕпер таврашне сăнама хушрĕ.

республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

2. Заказ № 3240.

и 22250-ЧЗВ

Пуç сĕлтрĕм те вăл анчахрах аллипе тĕллесе кăтартнă юпасем енне пăхрăм. Никам та çук. Тулаева ăçтан пенĕ? Пĕр-пĕр фашист снайперĕ мар-ши? Снайпер-мĕн пулсан, ăçта вырнаçма пултарнă? Стереотруба пулăшсан анчах? Выртнă çĕртенех уншпа шăтăкран сăнаса пăхатăп. Хайхи юпасене вăл куç умнех çитерсе кăтартрĕ. Икĕ юпине танлаштарса пăхатăп, вĕсен патĕнчи çĕре сăнатăп. Çук, куçа йĕкĕлтекенни курăнмасть.

Хĕвеланăç Двина леш енчи вăрман хыçне анса пыракан хĕвел, пире салам янă пек, юлашки хĕлхемĕсене тавралăха сапалать.

Тăхта-ха, сулахай юпа кутĕнчи курăк пăртак шанман-и? Чăнах та. Ăна паян ирхине кăна лартма пултарнă. Çавăнпа та ун кутне касса хунă çерем çинчи курăк нӳрĕк çитменнипе типе пуçланă. Мĕн тума лартнă ăна?

Унăн хулăнăшне куçпа виçме пикентĕм. Сылтăмрипе танлаштарсан, сарлакарах та çӳхерех иккен. Тен, юпа та мар вăл, юнашарти юпапа пĕр тĕслĕ сăрланă, шăп ун пысăкăш хулăн хăма? Апла пулсан, хăма хыçĕнче фашист снайперĕ выртать. Аяларах винтовка кĕпçи кĕмелĕх тата хăйне пăхса выртмалăх шăтăксем пулма кирлĕ. Сăнасансăнасан, чăнах та икĕ хура пăнчă асăрхарăм. Иккĕленӳ çук, фашист снайперĕ! Çавă амантнă Тулаева, çавах халь мана тĕп тăвасшăн. Юрать-ха, асăрхануллăрах пултăмăр. Унсăрăн?..

Аврланă винтовкăна хуллен шăтăк хĕрне кăларса хуратăп. Сывлăш çавăрса илетĕп те сулахай юпан икĕ хура пăнчă хушшине тĕллесе перетĕп.

— Лектертĕн-и?—ыйтать Тулаев, ура çине çĕкленме пикенсе.

— Тăхта, ан çĕклен, эпĕ пенĕ самантра вăл, тен, шăпах пуçне аяккалла илнĕ?

Патак çине пилотка тăхăнтартатăп та шăтăк хĕрринчи курăкран çӳлерех çĕклетĕп. Хĕрлĕ çăлтăрне юри хайхи «юпа» еннелле тăвататăп.

Тăшман, чĕрĕ пулсан, тӳрех шатлаттарма кирлĕ.

Ик-виçĕ минут тытса тăратăп,— çук, лектернĕ ăна эпĕ. Асăрханман пулсан?.. Ун пирки шутлама та хăрушă.

Тĕттĕмленсех пычĕ. Вунпĕр сехет çитерехпе пирĕн пата Блохин сержант связнойĕ упаленсе çитрĕ.

— Танталов юлташ, командир сире халех хăй патне чĕнет,— терĕ те вăл, пире кĕпер çинелле илсе кайрĕ, унта çитме 100—150 метр юлсан, кĕпер патĕнче ракета ялкăшса хăпарчĕ — тавралăха кăнтăрлахи пек çутатса ячĕ. Виççĕмĕр те пуçа чиксе выртрăмăр. Нимĕçсем, совет салтакĕсем кĕпер патне вăрттăн пырасран шикленсе, кашни пилĕк минутранах ракетăпа çутатса тăраççĕ-мĕн.

Çулăм çăмхи сӳнсен, маларах кайса, кăкăр таран алтнă окопа пырса кĕтĕмĕр. Çиелтен ăна йывăç турачĕсемпе хупланă. Блохин сержант та унтах.

— Разведка халь çеç пĕлтерчĕ: фашистсем кĕпере сывлăша сирпĕтме хатĕрленеççĕ, çак самантра бикфорд шнурне хатĕрлеççĕ,— терĕ вăл, унтан, саперсем енне çавăрăнса, хушрĕ:

— Кĕпере халех хамăр алла илмелле. Хуралти фашистсене пăппăн, систермесĕр пырса аркатмалла!

Кĕпер тĕлне çитме аллă метртан ытла юлманччĕ, фашистсем те пире асăрхарĕç — пуçларĕç пулеметпа пеме, пуç çĕклеме те шиклĕ. Икĕ сапера хайхи пулемета гранатăпа пăчлантарма хушрĕ.

Пилĕк минут иртмест — умлă-хыçлă граната çурăлни илтĕнсе каять, пулемет тăрлатма чарăнать.

Блохин ал сулать те: «Малалла!» — тет, сывлăша вут çăмхи хăпарнине, тавралăх çуталнине пăхмасăр, кĕпер çине чупса кĕрет, ун хыççăн — саперсем.

Юнлă тытăçăва кĕмелле мар манăн — бикфорд шнурĕнчен куç вĕçертмесĕр выртатăп. Вăл тĕрĕс-тĕкел пултăр, ăна фашист алли ан перĕнтĕр — çакă ĕнтĕ тĕллевĕм. Унччен те пулмарĕ, тахăшĕ шнур çине пĕшкĕнчĕ: фашист! Вут тивертесшĕн! Петĕм — лекрĕ, анчах... шнур тăрăх çулăм чарлаттарса куçма пуçларĕ. Ёлкĕрчĕ вĕт, эсрел!

Сиксе тăтăм та шнур патне вирхĕнтĕм, çулăм кĕпер

айнелле анса кайиччен чупса çитрĕм, ăна, татса ярса, çунма чартăм. Сӳнне шнура пăртак пăхса тăтăм, пысăк-пысăк хăрушлăх иртнине ĕненсен, ĕнсе çине тапса тухнă тара шăлкаласа илтĕм.

Çапăçу кĕпер варринче пыратчĕ ĕнтĕ. Унта чупрăм. Пысăк çухату тӳсеççĕ пулин те, фашистсем кĕпере алран вĕçертесшĕн мар. Пирĕннисен те йыш чаксах пырать. Хамăр салтаксенчен хăшĕсем, акă, кĕпер леш енне тухрĕç, граната çурăлать унта, автомат шатăртатать... Фашистсен тек кĕпер шухăшĕ мар — хăйсен çăлăнмалла. Сывă юлнисем аманнисене пăрахсах тарчĕç.

Тавралăх кĕçех шăпланчĕ. Хаяр çапăçу ĕшентерчĕ пулин те, ирччен пĕр куç хупман, тăшман тапăнасран хĕçпăшала хатĕр тытрăмăр.

Тĕрĕс-тĕкел юлнă кĕпере курса савăннăн, кĕçех йăл кулса тухрĕ хĕвел... Унпа пĕрлех Витебск енчи шоссе тăрăх хамăр танксем курăнса кайрĕç. Блохин сержант аллинчи пĕчĕк хĕрлĕ ялавпа анăçалла сулса кăтартрĕ: çул уçă!

Танк хыççăн танк... Хĕрлĕ Çар тăшмана, çĕмĕрсе-аркатса, хăвалать. Кĕçĕр эпир мĕн тери пысăк ĕç тунине, халь тин, кĕпер урлă çар техники вĕçĕмсĕр каçнине курса, туйса илтĕмĕр.

—Капитан юлташ!..— Янраса кайрĕ унччен те пулмасть Блохин сасси. Унталла çаврăнса пăхрăм. Маклашкин капитан çитсе тăнă иккен. Çăмăл автомашинăпа.

— Сирĕн задание...

— Маттур!— пӳлчĕ сержанта Маклашкин. Кĕпер çине пăхса илчĕ те тепре çавнах каларĕ:— Маттур, тăвансем! Паттăрсем!— Блохина ыталаса илчĕ, унтан — ман пата утса пычĕ...

Çав вăхăтра кĕпер çине бронетранспортерсем кĕрсе кайрĕç.

☆



# ПĔРРЕМĔШ „КУККУК"

— Лейтенант юлташ, пĕлтерме ирĕк парăр! — терĕ иккĕмĕш взводăн командирĕ Маркин сержант, сылтăм аллине çĕлĕк патне чыс пама çĕклесе.

— Пĕлтерĕр! — терĕ Хастаров лейтенант. Вăл сержант пăлханса пынинчен ырă мара туйса илчĕ. Инкеке чун яланах сисет çав, ним те тăваймăн.

— Ловимуха старшинана вĕлерчĕç. Каллех снайпер, политрука вĕлерниех пулас. Чугун çул урлă каçма тытăнтăмăр — тӳрех çатлаттарчĕ. Эпĕ хырăмпа шуçса каçрăм — мана та икĕ хутчен печĕ, анчах илеймерĕ, пульăсем пуç çиййĕпех шилесе иртрĕç. Старшина чугун çул линийĕ урлă кукленсех чупса каçма пикенчĕ — тӳрех тĕл турĕ. Аста снайпер!

— Пĕтĕмпех ăнланмалла. Хăй сыхланман. Халĕ ним те тăваймăн. Хуйхăрнипе чĕртеес çук. Кĕçĕр каçхине сержант ӳтне лини çинчен илсе тухатпăр. Халĕ ху взводунтан ман пата хăюллă та тӳрĕ перекен салтак ятратăн. Халех. Пĕр тăхтаса тăмасăр.

Маркин вăрт çаврăнчĕ те приказа пурнăçлама тухса вĕçрĕ.

Ку кĕтмен хыпар лейтенанта шухăша ячĕ. Юлашки виçĕ кун хушшинче ротăри виççĕмĕш командира вĕлерни чĕререн кулянтарчĕ. «Ку сĕмсĕр финн снайперĕ пĕрин хыççăн теприне пĕтерет. Çук, кун пек аташма урăх ирĕк памалла мар, пĕр командирпа политработника та хăвармĕ! Епле хăрушă снайпер. Шĕкĕлчет те шĕкĕлчет. Ну, ничего. Ытлашши ан иртĕн. Хăвăн та шăпу ырах пулмĕ!» — çилĕллĕн калаçса шухăшларĕ вăл.

Тепĕр вунă минутран çĕрпӳрте Ильясов çитсе кĕчĕ, вăл взвод командирĕ хушнипе килнине пĕлтерчĕ.

Лейтенант яштака пӳллĕ салтак çине тинкерсе пăхрĕ. Вăл салтака лайăх пĕлет. Вăрçăччenех стрельбищăра питĕ тĕл пенине астуса илчĕ.

— Вăт мĕн, Ильясов юлташ, сана пĕр ответлă задани. Çак таврара, пире хирĕçех, тăшманăн пĕр чее те ăста снайперĕ вырнаçнă. Юлашки виçĕ кун хушшинче виçĕ командира вĕлерчĕ. Пайтах çухату тӳсетпĕр. Вăл инçех те мар, тахăш чăрăш тăррине вырнаçнă та, ăста сунарçă пек тӳрех тĕл тивертет. Пирĕн позицие питĕ лайăх курса тăрать пулас. Сирĕн умри задача: ăна шыраса тупмалла та тĕп тумалла. Асăрхаттаратăп: сирĕн унран чеерех те асăрханулларах пулас пулать. Усăсăр ан пер: пĕтерттеретĕн. Халĕ çак задание пурнăçлама ăнăçлăх сунатăп. Икĕ кун хушши срок. Нумай тăсмалла мар. Ĕçе тытăнăр!

Ильясов ирхи апат хыççăн нимĕç снайперĕ ăçта пытанса ларнине сăнама тытăнчĕ. Вăл окопран шăвăнса тухрĕ те бруствер урлă йăванса каçрĕ. Ун çийĕпе пульăсем ши! ши! туса илчĕç, пĕри кĕçех çаклатаймарĕ, хулĕ çинчи шинеле шăйăрса кайрĕ, ӳте кăшт çеç лекеймерĕ.

— Пулатчĕ ĕç,— пуçра çиçсе илчĕ шухăш. Бруствер урлă ăнăçлă каçса ӳксен, Ильясов, тарăн юра арлан пек шăтарса, малалла майĕпен шăвăнчĕ. Çурăм хыçне çакнă снайпер винтовкипе патронташ ăна хăвăрт шăвăнма чылай чăрмантарчĕç.

Ильясов, вăйлăскер, малалла васкарĕ, вăл никамăн мар тăрăхри юрпа витĕннĕ пĕр тĕмеске (пĕр-пĕр чул купи пулас) патне тапаланчĕ.

Нимĕçсем те асăрхамаççĕ ăна — ун çине ятарласа перекен пулмарĕ. Хайхи снайпер та асăрхаймасть курăнать — унсăрăн ун патĕнче пульăсем чашлатмалла. Ытти чухнехи пек нейтральнăй тăрăх çийĕпе, чылай çӳлтен, пульăсем шăхăрчĕç, икĕ енчен те салтаксем хире-хирĕç перĕ-пере яраççĕ, ытларах сас тăваççĕ, икĕ енчен те нимĕнле атака та, хускану та сисĕнмест-ха.

Юра сирсе шăвăннипе вăл ăшша пиçрĕ. Чул патне çитсен, каялла пăхрĕ: тарăн суха касси пек йĕр тăсăлать. «Ку çулпа каялла тухма лайăх»,— шухăшларĕ вăл.

Купа çинчи юра сирчĕ те — кăвак чул курăнса кайрĕ.

Ильясов чул хыçне хăйне выртмалăх çумĕнчи пĕчĕк кĕреçепе юра чаврĕ. Хăйĕн снайпер винтовкине ниепле те малалла, чул урлă кăларса хураймарĕ: тăшман тӳрех асăрхама пултарать, вара тӳс кăна.

Нимĕçсемпе финсен апат вăхăтне кĕтес пулать. Апат вăхăтĕнче дозор кăна юлать, вăл пурне те асăрхама ĕлкĕреймест. Ыттисем пурте апатра. Чăнах та, пĕр-икĕ сехет тăшман енне сăнаса выртрĕ, бинокльпе кашни хыр е чăрăш çине тинкерсе пăхрĕ, çӳллĕ мар ӳснĕ хыр тĕмĕсене те тимлĕн сăнарĕ — нимĕнле çынна та асăрхамарĕ. Хĕллехи кун пит тӳлек пирки юрпа витĕннĕ йывăççем, юмахри паттăрсем пек, пĕр хусканусăр, мăнаçлăн курăнчĕç.

Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче, пĕррепе икĕ сехет хушшинче, снайпер винтовкине хăйне кирлĕ пек майласа хучĕ...

Вăхăт малалла шурĕ, анчах тăшманăн чее снайперĕ хăйне палăртмарĕ.

Ильясов çапла касчен выртрĕ. Алли-ури шăнса кӳтнипе вăл тĕрлĕ майпа ăшăнасшăн пулчĕ, анчах çĕкленме юраманни чылаях чăрмантарчĕ. Аптранă енне вăл флягăри юлашки спирта та ĕçсе ячĕ. Спирт ĕçнĕ хыççăн, чăнах та, ал-ури чылай ăшăнчĕ, çанçурăмĕ те хĕрчĕ, анчах ыт-

ларах çиесси килчĕ, сумкăран сухарипе шпик кăларса илчĕ те хăяккăн выртнă çĕртех çиме пуçларĕ...

Тĕттĕм пуличчен выртрĕ, анчах усси пулмарĕ, снайпер хăйне палăртмарĕ.

— Капла выртсан, вăл хăйне эрне хушшинче те систермĕ. Çук, урăхла меслет шырамалла. Ăна тытма икĕ кун пана, пĕри усăсăрах иртрĕ ĕнтĕ...

Каçхине пилĕк сехетре, тĕттĕмленсен, вăл каялла таврăнчĕ. Хăйĕн ĕçĕ ăнманнипе Ильясов пĕр командира та курăнасшăн марччĕ. Анчах çĕрпӳрте çитсен, взвод командирĕ Маркин сержант ĕç мĕнле пынине пĕлтерме хушрĕ. Ильясов паянхи кун никама та асăрхаманни çинчен пĕлтерчĕ. Малашне снайпера урăх меслетпе илмеллине те сăмах хушрĕ, анчах мĕнле меслетне хăй те пĕлеймерĕ.

— Вăт мĕн,— терĕ ăна Маркин сержант.— Ку ĕçе пĕччен тумалла мар, иккĕн. Эсĕ унта сунарçă пек сыхласа выртаканни пулатăн, тепри ăна йĕкĕлтекенни пулмалла. Вара вăл хăйне палăртĕ. Унсăрăн... унсăрăн айван мар вăл.

Сержант çавăнтах Табаков салтака чĕнсе илчĕ.

— Вăт мĕн, Табаков юлташ! Эсĕ ыран яра куна Ильясовпа пĕрле финн снайперне тупма тăрăш. Ыран сирĕн çав чее тилле тытмалла, ĕçе вăрăма ямалла мар! Ку вăл лейтенант приказĕ. Çак ĕçе сана та явăçтаратпăр. Мĕнле тытассине хăвăр шухăшлăр. Ыранхи кун уншăн юлашки кун пултăр. Унсăрăн сире...— терĕ те вăл хура куçне ялкăштарса илчĕ. Ку: «Сире ахаль пулмасть»,— тенине пĕлтерчĕ.

Ильясовпа Табаков тăшман снайперне тытас пирки тĕрлĕрен шухăшласа пăхрĕç.

Табаков, патак çине каска тăхăнтарса, окопран кăтартма сĕнчĕ.

Ильясова ку шухăш килĕшрĕ, анчах вăл çакна шута илме кирлине палăртрĕ: снайпер кашни совет салтакнех пемест, вăл командирсене тумран е ытти паллăсенчен уйăрса илет те — пĕтерме тăрăшать.

— Кунта командир тумĕ те, аяккине полевой сумка е планшет çакса яни те кирлĕ — унсăрăн снайпер пемесен те пултарать. Вăт пирĕн мĕн шута илмелле.

— Ăна мĕнле тумалла? Чăнах та, йывăр ыйту,— ун шухăшĕпе килĕшрĕ Табаков.— Халех эсĕ старшинаран çĕлĕк, каска, кĕске кĕрĕк, полевой сумка илетĕн. Кĕрĕк ăшне ăпăр-тапăр тултаратпăр та аялтан, тухса ӳкесрен, пĕр-пĕр материалпа çĕлесе тыттаратпăр. Çак кĕрĕк витĕр патак вĕçне кăларатпăр та ун çине каска лартса яратпăр. Патак ан курăнтăр тесен, кĕрĕк çухавине тăрататпăр. Çак катемпин хулпуççи урлă полевой сумка çакатпăр. Эсĕ, çак «лейтенанта» окоп хыçнелле кăларатăн, ăна тыла кăларса яма хатĕрлетĕн. Паллах, вăл кукленерех тухать. Снайпер ун полевой сумкинчен ку командир пулнине палласа илет. Вара пеме тивĕç. Персен, тӳрех окоп хĕрнелле ӳкеретĕн. Ман шутпа, çапла тусан, ĕç тухмалла пек.

Ильясов хăйне ырă шухăш пырса кĕнĕшĕн хĕпĕртерĕ. Табаков та ун шухăшĕпе килĕшрĕ.

Вĕсем ирхи шуçăм çапиччен хăйсен вырăнĕсене йышăнчĕç. Ильясов каллех хăйĕн малтанхи чул купи патне çитсе выртрĕ, снайпер винтовкине тăшман енне тĕллесе хучĕ. Хальхинче вăл кунта килсе выртнине пикам та асăрхаймарĕ. Хĕлле ирхине, пилĕк сехетре, тăшман вăранмасть-ха тата çанталăкĕ те тĕттĕм, çутăлма та тытăнман. Табаков Вăрмар районĕнчи пĕр колхозра клуб заведующийĕнче ĕçленĕ. Хăюллă та ĕçчен, кирек мĕнле ĕçе те пуçарса яма юратаканскер. Хушнине яланах тăрăшса тăвать. Пушă вăхăтра чăваш юррисене юрлама, кулăшла калавсем каласа пама ăста. Авланман. Ялтан та, районтан та тăтăшах ун патне çырусем килеççĕ. Ытларах — хĕрсен çырăвĕсем. Вĕсене вăл темиçе хут та вуласа тухать. Çыру илсен, савăнăçлă. Тăван ялне ватă амăшĕпе аппăшĕ юлнă. Вĕсем те хутран-ситрен çыру яраççĕ.

Илюк вĕсене çав кунах хуравлать. Кирек мĕнле майсăр вăхăт пултăр, пурпĕрех ответ пама тăрăшать. Ку ун йăлине кĕнĕ хăпаху. Уçă кăмăллă этем. Халĕ те вăл

Ильясов каланине пĕтĕмпех хатĕрлерĕ. Командир тумлă катемпи ун çумĕнче. Ăна вăл хăй окопĕн стени çумне сĕвентернĕ. Çутăласса çеç кĕтет.

Окоп тĕлĕнче чăрăш лăсси çинче ларчĕ-ларчĕ те кăштах ĕнтĕркерĕ. Çĕрĕпех ыррăн çывăрман, шухăшланă. Кăçатăри урисем шăна пуçласан, вăл сасартăк куçне уçрĕ. Ир пулать иккен. Тавралăх çутăлма тытăннă. Шартлама сивĕ. Сывлăш тĕтреленсерех тăрать. Илюш пурпĕр тăшман позицине курать. Питĕ витĕр куçлă. Вăл кунтан икçĕр метр. Окопсем куранмаççĕ, анчах юр таптанчăкĕ, чавнă вырăнсем унта тăшман тăни çинчен калаççĕ. Унтан малта, нейтральнăй тăрăхра, Ильясов выртать, вăл тата ытларах çутăласса кĕтет, катемпие çĕклемелли сигнала аллипе кăтартмасть-ха. Табаков ăна куçне илмесĕр сăнать.

Ир пулса çитнĕ-çитмен, тăшман артиллерийĕ пирĕн позици çине пеме тытăнчĕ.

«Каллех вăрçăн çĕнĕ кунĕ пуçланни çинчен фашист хыпарлать. Эпир ăна манасран пит шикленет пулас!» — тарăхса шухăшлать Табаков.

Ильясов, Атăлăн сулахай енче вăрман хушшинчи ялта ӳснĕ мари çынни, сунара çӳреме юратнă. Çавăнпа та-и, тен, алли те тӳрĕ, вĕçекен кайăка та персе тивертет. Халĕ те вăл пĕр-пĕр мулкача е тилле тытма тухнă пек хатĕр выртать. Халь-халь сиксе тăрса чупас пек.

Снарядсем Табаковсем тăракан позицирен хыçала, иккĕмĕш эшелона, ӳксе çĕре кисретме тытăнчĕç. Яланах ир çинче е çĕрле пирĕн çĕнĕ салтаксем килнине пĕлсен, çакăн пек «ырлăх сунса» кĕтсе илеççĕ. Фашистсен йăли вăл.

Пĕр тапхăр печĕç те чарăнчĕç. «Ирхи апатчен чунĕсене кантарчĕç пулĕ»,— тесе совет салтакĕсем кулса илчĕç.

Ильясов каялла çаврăнчĕ те аллине çӳлелле çĕклесе паллă пачĕ. Ку катемпие çĕклемелли сигнал.

Табаков васкамасăр катемпи авринчен икĕ аллипе çавăрса тытрĕ, командир окопран тухнă евĕр хусканусем

туса çĕклерĕ те каялла усăнтарма пикенчĕ кăна — чăнт! тунă сасă пулчĕ. Вăл çавăнтах «командир» кӳлепине хăй патне антарчĕ. Тӳрех кăвак каскăна тĕрĕслерĕ. Хайхи снайперăн пули каскăн хыçал енчен кĕнĕ те çамка тĕлĕнчен тухса кайнă. «Шельма! Хурçа çĕмĕрекен пульăпа перет иккен! Чăнах та, тĕл перет. Тӳрех пуçран, миме тĕлĕнчен çаклатрĕ. «Теприне» пĕтертĕм тесе савăнать-тĕр халь. Ничего, нумай савăнаймăн!» — хăй тĕллĕн калаçрĕ Табаков.

Вăл çавăнтах финн снайперĕ каскăна тивертни çинчен алăпа паллă туса Ильясова пĕлтерчĕ. Тепĕр çур сехетрен Табаков траншея тăрăх урăх çĕре куçрĕ. Хальхинче çак кĕлетке çинех пысăк çĕлĕк тăхăнтартрĕ. Каллех «командира» окопран кăларма тытăнчĕ. Кăвак çĕлĕк траншейăн брустверĕ урлă курăнсанах, ăна пуля пырса тиврĕ те çĕлĕк чалăшрĕ. Илюш катемпие тата çӳлерех çĕклерĕ. Хальхинче пуля унăн çурăмĕнчен, шăп чĕре тĕлĕнчен, тухса кайрĕ. Халĕ тин Табаков катемпие окопа ӳкерчĕ, «командир» тĕшĕрĕлсе аннă пек хускану турĕ.

Аçтан пенине Ильясов лайăх асăрхарĕ: пĕр лăпсăркка та пысăк чăрăш çинчен. Хăш турат хускалса илнине те курчĕ.

— Аха, вăт ăçта пытанса ларать хайхи чее тилĕ!

Ильясов савăнсах кайрĕ. Унăн, тискер кайăк тытма вĕреннĕскерĕн, çакна курсан, чĕри хыттăн тапма тытăнчĕ.

Алли винтовкăна çирĕппĕн ярса тытрĕ, куçĕпе хайхи хускалса илнĕ туратран кăштах çӳлерех тĕллерĕ те персе ячĕ.

Ильясов куçне илмесĕр темиçе секунд пăхса тăчĕ: тĕлĕнмелле! Хайхи хыр турачĕсем айĕнче пĕр çын кутăн çакăнса тăрать!

Ильясов каялла çаврăнчĕ те каллех сигнал пачĕ: Табаков çавăнтах хăйĕн катемпине майпен çĕклерĕ. Ку чухне катемпи пуçĕнче каллех каска. Темиçе минут хушши çĕклесе тăчĕ, анчах никам та перекен пулмарĕ.

Табаков хăюланса пуçне бруствер урлă кăларчĕ,

тăшман позици еннелле пăхрĕ, хальхинче малтанхи пек перекен тупăнмарĕ. Ăна курсан, Ильясов хайхи снайпера персе тытнине тин ĕненчĕ.

Вăл васкаса каялла шăвăнса тухрĕ, траншейăна çитсе ӳксен, Табаков патне чупса пычĕ. Икĕ салтак, тахçан курман туссем пек, ыталанса илчĕç те пĕр-пĕрне хыттăн чăмăртарĕç.

Вунă минутран иккĕшĕ те Хастаров лейтенант патне ыткăнчĕç. Ăна шыраса тупсан, вăл панă ответлă задание пурнăçлани çинчен савăнăçлăн пĕлтерчĕç.

— Хамăр подразделени коллективĕ ячĕпе тав тăватăп, çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырлăх-сывлăх сунатăп. Хам та куратăп: хайхи çыхăнса ларнă чее снайпер кутăн çакăнса тăрать. Ун пек «куккуксене» эпĕ шур финсемпе вăрçнă чухнех курсаттăм. Вăл «куккуксем» манăн чи лайăх юлташсене пĕтерчĕç. Вĕсене пурне те çакăн пек вĕрентмелле: кутăн çакăнса тăччăр. Сирĕн ку малтанхи ăнăçлă утăм!

Çав кунах пĕтĕм часть Ильясовпа Табаков чи чее те сĕмсĕр финн снайперне «кутăн çакса яни» çинчен тем тĕрлĕ мухтаса калаçрĕç, çакна чаçре тухса тăракан хаçат та çырчĕ.

Ильясовпа Табаков вăрçă пĕтиччен çĕре яхăн ирсĕр тăшмана пĕтерчĕç, анчах пĕрремĕш «куккука» ăнăçлă тытни вĕсен асне ĕмĕрлĕхех юлчĕ. Тен, çакăн хыççăн вĕсем снайпер пулма шутларĕç те-и?

☆

# ÇĔМĔРТ ÇЕÇКИ ÇУРĂЛСАН



Пуйăс чăваш çĕршывне Арзамас енчен хашлатса пырать. Ун хыççăн хура çăра тĕтĕм явăнса юлать те вăрман çине саланать.

Тул çутăлнă. Çуркунне тул часах çутăлать.

Вакун чӳречисенчен çурхи сарă хĕвел йăл кулса пăхать. Хĕвел пайăркисем пит çине ӳксенех, Хастаров вăранса кайрĕ те, пит-куçне алтутрипе шăлса илсе, хăвăрт тăрса ларчĕ. Ун ури вĕçĕнче кутамккаллă икĕ вырăс хĕррарăмĕ, вăтам çулхискерсем, хăйсен ывăлĕсем патне курма каяканскерсем, Çĕмĕрлене çитсен, анса юласси çинчен калаçса пыраççĕ.

Хирĕç сак çине малтанхи пассажирах — Хусан çынни — тăсăлса выртнă та çаплах ăшă ыйха туртать. Вăл каçхине сыпнăччĕ, Хастаровпа мăнкăмăллăн кăна калаçкаларĕ, хăй камне те пĕлтермерĕ.

Ӳсĕр çын лăплансан, Борис хăй вырăнне кĕрсе çыварчĕ.

Халĕ, кĕске те сиплĕ ыйхăран вăраннă хыççăн, пĕр

тапхăр чӳречерен пăхса ларчĕ. Ун куçĕ умĕнче тавралăх пĕрмай улшăнса пычĕ: малтан хура уйсем, унтан симĕс ыраш калчи уйĕ... Акă вĕтлĕх вăрман. Кĕçех хура вăрман пуçланчĕ.

Борис сиксе тăчĕ, чăматанпран алшăллипе супăнь илсе, кăвак гимнастеркине хулпуççи урлă çакса çăвăнма васкарĕ.

Вун-вунпилĕк минутран вăл, лейтенант тумне тăхăннă йăрăс каччă, çурри уçă чӳрече умне пырса тăчĕ.

Коридорпа иртекен хĕрарăм-кондуктор пуйăс чăваш çĕршывне çитсе кĕни çинчен пĕлтерчĕ. Кунта илемлĕ хыр вăрманĕ.

— Апла кĕçех Çĕмĕрлене те çитетпĕр? — ыйтрĕ Хастаров.

— Çапла. Çиччĕ те çирĕмре унта пулатпăр,— хуравларĕ кондуктор, хăй малалла иртнĕ май.

Тăван çĕршыва çитсе кĕрсен, камăн чĕри лăпкă тапма пултартăр-ха?

Хастаров чĕри хавасланса, савăнса тапать. Чунĕ, çунатланса, чăваш çĕршывĕ çийĕпе вĕçет, ĕмĕчĕсем вара пĕрре килти аппĕ-амăшĕ, йăмăкĕ патне вĕçсе çитрĕç, тепре Шупашкара, савнă тусĕ патне, çитсе ӳкрĕç. Вăл, тăван хулара вĕренсе, учителе тухнă. Борис педагогика институтне, хăйпе вĕреннĕ юлташĕсене, унти паллă преподавательсене, доцентсене аса илчĕ.

Хастаров каллех чӳрече витĕр пăхрĕ. Ун умĕнче вĕçĕхĕррисĕр вăрман тăсăлать. Çурхи вăрман. Хăшпĕр çĕрте, васансемпе айлăмрах вырăнсенче, хуралса кайнă юр лаптăкĕсем курăнкалаççĕ. Чукун çултан инçех мар шурă çӳçесем хăйсен черчен çулçисене кăларма тытăннă. Хурăнсемпе вĕренесен папкисем кĕренленсе, тăртанса кайнă, хура хурамасемпе йăрăс юмансем хăйсен хĕллехи тумĕсене улăштарма ĕлкĕреймен-ха.

Борис, çурхи вăрман çине пăхса пынă май, виçĕ çул каялла Райăпа çӳренине аса илчĕ.

Вăл ĕçленĕ ял вăрман хĕрринчеччĕ. Пĕр çуркунне

Борис ялти çамрăк медсестрапа паллашрĕ. Вăл Рая ятлăччĕ. Ялти çамрăксенчен чылайăшĕ ун çине куç хыватчĕ, анчах та хĕр никампа çӳреместчĕ.

Борис, ăна курсан, йăлтах улшăнса кайрĕ. Малтанхи хăюлăх таçта кайса кĕчĕ, кирлĕ сăмахсем тупăнмаççĕ, ăш çунать, чĕре кăкăрта хĕрӳленсе тапать. Рая та Борисран пăрăнмасть, унпа кăмăлласах калаçать. Ытларах хăйĕн ĕçĕ çинчен калать вăл. Ăна каччă хапăлласах итлет. Унăн та майĕпен чĕлхи салтăнать, шкулти ĕçсем çинчен сăмах хускатать, вуланă кĕнекесем çине куçать...

Вĕсем каçхине вăрман хĕрринче уçăлса çӳренĕччĕ. Пĕр лапсăркка çĕмĕрт шур чатăрпа витĕннĕ пек чечекреччĕ. Бориспа Рая унăн çеçкине татма пычĕç. Сăмсаçăвара ытарма çук тутлă шăршă пырса çапăнчĕ, кăкăр тимĕрç вĕркĕчĕ пек çĕкленсе сывларĕ, çанçурăм çунат хушнă пек çăмăлланчĕ...

Çук, каччă илемлĕ çĕмĕртĕн туратне хуçма хĕрхенчĕ.

— Çак çутçанталăк ырлăхĕпе иксĕлми савăнар,— сĕнчĕ Борис.

Хĕр ун çумне, лапсăркка çĕмĕрт айне, пырса тăчĕ. Вĕсем, пĕр-пĕрин çине ытарайми пăхса, хăйсен хĕрӳ туйăмĕсене ăшшăн систерчĕç.

Борис хĕре çавăн чухне пуçласа ыталанăччĕ. Рая малтанах тĕлĕннĕ пек пулчĕ, каччă çине шăтарасла чăрр! пăхрĕ... Каччă, хăй «айăпне» сирес тесе, шăппăн та кăмăллăн «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан» юрра пуçласа ячĕ, Рая та тӳссе тăраймарĕ, çинçе сассипе юрра хутшăнчĕ...

Борис каллех чӳрече витĕр тинкерчĕ. Вăрман хĕрринчи хӳтлĕхре симĕс курăк тапса тухнă, унта та кунта малтанхи çеçпĕл, серте тухнă. Халĕ вăрманти кайăксен илемлĕ юрри шăранма кирлĕ. Анчах пуйăс çинче аякри сас-чĕв илтĕнмест.

Вăрман, вăрман... Ытарайми илемлĕ вăрман!

Хăй те вăл Сăр тăрăхĕнчи вăрман хĕрринче ӳснĕ, ачаран ун ытамĕнче ачашланнă, савăннă.

Вăрман — унăн савăнăçĕпе киленӳ сăпки, чупа çĕкле-

кен поэзи сачĕ, ырлăхпа пурлăх керменĕ... Вăрман — унăн малтанхи юрату çулăмĕ...

Пуйăс малалла хашлаттарса ыткăннăçемĕн вăрман шултраланса пычĕ. Темле шур шупăр тăхăннă яштака чăваш хĕрĕсене аса илтерсе, хурăнсем вĕлтлетсе юлаççĕ...

Пуйăс хăвăртлăхне чакарса пычĕ, чугун çул сулахай енче çурт-йĕрсем пуçланчĕç: хыртан пураса тунă пысăк складсем, йывăççене çурмаран çурса тунă темле çуртсем... Пуйăс вокзал умне çитсе чарăнчĕ те, пассажирсем Çĕмĕрле перронĕ çине тухма тытăнчĕç.

Перрон çинче темиçе чăваш хĕрарăмĕ çăмарта, çĕрулми икерчи, вĕт кукăль сутса тăрать, хăшĕсен аллинче — ем-ешĕл серте.

Борис, шинельпе чăматанне çĕклесе, перрон çине анчĕ. Вăл чăвашла калаçасшăнах хĕрарăмсем патне пычĕ.

— Военный, у меня ничего нету, все продал,— тет пĕр çамрăк хĕрарăм, Борис çине тимлĕн пăхса.

Борис ăна çавăнтах тӳрлетет:

— Продал мар, продала те, вырăссем çапла калаççĕ...

— Эсĕ чăваш-çке. Аманса таврăнатăн-и? — тет хайхи хĕрарăм, витĕмлĕ хура куçĕсемпе çар çыннин сулахай янахĕнчи çĕвĕк çине пăхса.

— Çапла. Киле вăхăтлăха курма ячĕç.

— Манăн та сирĕн пек таврăнас пулсан, мĕнле савăнăттăм. Урăх ним те кирлĕ марччĕ. Ара, эсĕ Штанаш учителĕ пулмарăн-и-ха? — сасартăк тĕлĕнсе ыйтрĕ хайхи çамрăк арăм.

— Çаплаччĕ. Ăçтан пĕлетĕн? — Хастаров та хĕрарăм пит-куçĕнчен тинкерсе пăхрĕ.

— Лайăх астăватăп. Эсир Борис ятлă, хушаматăр — Хастаров.

— Тăхтăр-ха, тăхтăр. Астума тытăнтăм. Эсир Штанаш столовăйĕнче ĕçлемен-и-ха?

— Ку та тĕрĕс. Пĕр çул ĕçлерĕм. Унти учительсене пурне те астăватăп.

— Каçарăр, ятăр сирĕн Римма марччĕ-и-ха?

— Çапла чĕнетчĕç. Эсир пумаях улшăнман, анчах командир тумĕ тăхăннăран темле патмарланнă пек туйăнатăр.

Римма ун çине куçне илмесĕр пăхать.

— Хăвăр мĕнле пурăнатăр?

— Кăштах укçа тыткалама тесе, çăмарта сутма килтĕм...

— Качча тухнă-и? — терĕ каллех Борис, унпа кăсăкланса.

— Эсир салтака кайнă çулах тухрăм. Октябрь уявĕ хыççăн, хĕл ларсан.

— Упăшкăр ăçта?

— Ăна вăрçă тухнă çул илсе кайрĕç те, малтанхи вăхăтра çыру яратчĕ; виç уйăх каялла вилнĕ хучĕ килчĕ. Телейсĕр эпĕ, Борис Иванч. Унта та телей пулмарĕ,— терĕ те Римма, хура куçне куççуль тулчĕ, ăна вăл шурă тутăр вĕçĕпе шăлса илчĕ.— Унран ывăл ача юлчĕ. Çулталăк тултарчĕ. Хунямапа пурăнатпăр. Вăл ватă, час-часах чирлет. Пĕтĕм йывăрлăхĕ ман хулпуççи çинче. Укçи-тенки, вутти-шанки, çипуçĕ, апат-çимĕçĕ, выльăх апачĕ — пурте. Пĕр арçын тĕсĕ те çук. Ах, ытла та нумай калаçса кайрăм сирĕнпеле... Каçарăр-ха. Тата çакна ыйтса пĕлем. Эсир çав Райка текен хĕрпе туслăччĕ, халĕ мĕнле... çыхăну пур-и?

— Эсир ăна та пĕлетĕр-çке!

— Пĕлмесĕр, ара. Сире темиçе хутчен пĕрле те курнăччĕ, сирĕн туслăх çинчен çамрăксем хушшинче те калаçатчĕç...

— Çыру çӳретнĕ, анчах хăйне икĕ çула яхăн тĕл пулман.

— Ман хăлхана темле хыпар пырса çитрĕ. Хайхи, райздраври, ăна качча илет текен хахать* пур. Те чăнах — çирĕплетсех калама пултараймастăп.

— Хăçан илтнĕ? — вăйкăнсах ыйтрĕ Борис.

---

* Хахать — хыпар, сăмах.

— Анчахрах, Хӗрлӗ Чутая кайсан, пӗр палланӑ хӗрарӑм каласа пачӗ. «Пирӗн Катрамовӑн туйӗ пулмалла, теççӗ. Хӗрӗ Шупашкарта, тет, çӗмӗрт чечеке ларсан авланмалла, тет».

Борис хӑйне темле çирӗп тытас тесен те, ку хахать ӑна пӑлхатса ячӗ, чӗринчи вӗчӗ пыр патне çити çӗкленчӗ те пӑвса лартрӗ.

— Тата мӗн пӗлетӗн, Римма, кала, пӗтӗмпех кала. Ан пытарса хӑвар,— тӗпчеме тытӑнчӗ каччӑ.

— Урӑх нимӗн те пӗлместӗп. Анчах Катрамов Райккӑна мӑшӑр мар: пӗри — хурчӑка, тепри — кӑвакарчӑн.

— Римма, çыннисене пӗлмесӗрех ăçтан апла калатӑн-ха?

— Пӗлмен пулсан, каламастӑп та. Пирӗн ял хӗрӗ Хӗрлӗ Чутайра техничкӑра ӗçлесе пурӑнчӗ. Кӑрлик Настукӗ лайӑх хӗрехчӗ. Халӗ кӗçех ача туса памалла ӗнтӗ. Кампа пулнӑ тетӗр-и? Хӗрӗн хваттер хуçи каланӑ тӑрӑх, Катрамовпа пулнӑ, теççӗ. Вӑл, хурчӑка, хӗре темле ултала, алла илме пӗлӗ...

— Вӑт епле вӑл Катрамов! Эп ӑна ун пек çын тесе шутламан,— хӑй тӗлӗннине пытараймарӗ Борис.— Катрамов хӑй ӑçта халӗ? Чутайра-и?

— Ӑна пӗлместӗп. Анчах унпа эсир, Борис, асӑрханулла пулӑр. Вӑл чее те усал, теççӗ...

Борисӑн, киле çитсе, ашшӗ-амӑшне питӗ курас килетчӗ, анчах çак ӑнсӑртран илтнӗ хыпар унӑн шухӑшне пӗтӗмпех улӑштарса хучӗ.

— Мӗн кунта тӑратпӑр, каяр. Пирӗн пӗр çулпах каймалла çке. Тӑрсан, çул кӗскелмест,— терӗ Римма, Бориса хӑйпе пӗрле çула тухма чӗнсе.

— Çук, Римма, ман халех Шупашкара çитмелле. Халех. Çак пуйӑспах.

Пуйӑс çине ларсан, Борис çул тӑршшӗпех Римма пӗлтернӗ усал хыпар пирки шухӑшласа пычӗ. Ӑна Рая çара ӑсатни аса килчӗ. Çара кайнӑ чух та хайхи Катрамов ӑна ырап хуппинче тӗл пулчӗ. Хӑй районти сывлӑх пайӗн

инспекторӗ пулнӑ май час-часах Рая патне велосипедпа пырса тухатчӗ.

Ял ҫыннисем, тусӗсем Хастаровпа Волкова ӑсатма тухнӑччӗ. Вӗсене вӑрман хӗррине ҫитичченех ӑсатса ячӗҫ. Вӑрман хӗррине ҫитсен, пурте чарӑнчӗҫ те ҫара каякансемпе сывпуллашма тытӑнчӗҫ.

Хастаровпа Волков кашни ҫынпах алӑ тытса уйрӑлчӗҫ. Ҫав самантра Рая патне (вӑл та Бориса ӑсатма килнӗччӗ) велосипедлӑ ҫын ҫитсе чарӑнчӗ. Волков ҫакна малтан асӑрхарӗ те Бориса чӗнчӗ:

— Куҫу умӗнчех савнӑ хӗрне ҫавӑтса каяҫҫӗ,— терӗ вӑл, хӑйсенчен аяккарах тӑракан хӗрпе каччӑ ҫине кӑтартса. Борис хӑйне хӑй те ӗненмерӗ: хайхи Катрамов унӑн тусӗпе тем ҫинчен калаҫса тӑрать.

Бориспа Володя Волков ҫавӑнтах ҫаксем патне пычӗҫ.

— Мӗншӗн халӑхран аякка пӑрӑнтӑр? — ыйтрӗ вӗсенчен Волков.

— Сирӗн пек, юратушӑн ҫунмастпӑр, ӗҫ пирки калаҫатпӑр,— хуравларӗ Катрамов.

— Ӗҫ пирки калаҫма хӑйӗн вырӑнӗ пур. Сирӗн кунта мар, вӑрман ӑшнерех кӗмелле пулнӑ,— тӑрӑхларӗ Борис.

— Эпӗ хама пӑхӑнакансемпе ӗҫ пирки кирек ӑҫта та калаҫма пултаратӑп. Ӑнлантӑр-и? — терӗ Катрамов, шур куҫӗпе пӑхса.— Вӑрманта мар, вӑрман ҫумӗнче эпир...

— Айтӑр вӑрмана кӗрер, кунта шавласа тӑма аван мар. Эпир, сана пӑхӑнаканӗсем, ӑҫта калаҫмаллине хамӑр палӑртар,— терӗ Хастаров.

Ӗҫ шалалла кӗнине тата ку икӗ каччӑран патак ҫиессине Катрамов тӳрех туйрӗ.

— Манӑн вӑхӑт ҫук. Упакушкӑнне ҫитес пулать —васкатӑп,— терӗ те вӑл, ҫавӑнтах велосипедне ярса тытрӗ.

Анчах ун ҫулне тӗреклӗ Володя пӳлчӗ.

— Тӑхта, хаклӑ тусӑм, эсӗ мӗншӗн Райӑна ҫулӑхатӑн?

— Йӗркеллӗрех пул. Мана тӗкӗнсен, салтака лекейместӗн. Тата ӗҫнӗ... Асту, лӑпкӑрах пул. Ӑнлантӑн-и? — терӗ вӑл, сылтӑм аллине кӗсйине чиксе.— Эсир мана

хĕнесшĕн-им? Халех халăха кăшкăратăп. Вĕсем свидетель пулаççĕ...

— Чарăн, Володя, çапăçма кирлĕ мар,— лăплантарма тăрăшрĕ Рая. Бориспа Володя Катрамов хыççăн утрĕç, Рая хыçала юлчĕ. Вăл çамрăксем уншăн хирĕçнипе пачах пăтранса кайрĕ.

Борис Катрамова аллинчен тытрĕ:

— Кала, мĕншĕн Райăна çулăхатăн? Мĕн кирлĕ сана?

— Рая сана мĕншĕн кирлĕ, мана та çавăншăнах. Эп ăна юрататăп... Татах ыйтусем пур-и? — Борис çине шурă куçпа пăхрĕ Катрамов.

— Ху юратни мар, Рая юратни çинчен кала!

— Эсĕ ăна ахалех ăнланма тивĕç. Сана ăсатнă çĕртен манпа кунта килниех çавăн çинчен калать,— мăнкăмăллăн хуравларĕ Катрамов.

— Кала-ха, Рая, çак çынпа эсĕ мĕн çинчен калаçатăн? — сиввĕн те хыттăн ыйтрĕ Борис.

— Манпа çакăн пек саспа калаçатăр пулсан, нимĕн те каламастăп. Эпĕ сирĕн умра айăплă мар,— кӳренсе хуравларĕ хĕр.

— Апла пулсан, хăвăн савнă тусу хыççăн вĕçтер,— терĕ те Борис, çаврăнса тăчĕ. Унăн ăшчикне темĕн каплланса килчĕ: кунта тарăху та, кĕвĕçӳ те, вĕчĕ те... Рая кăштах утрĕ те чарăнса тăчĕ. Хăйĕн тусĕнчен кун пек уйрăлни ăна килĕшмерĕ. Хастаров хĕр патне çывхарчĕ. Рая та шывланнă куçне шăлса илчĕ те ун еннелле пăхрĕ.

— Каçар мана, Борис, эп айăплă. Урăх ун пек пулмĕ. Эпĕ ăна нихçан та юратман. Ĕç пирки çеç пулнă пирĕн хушăри калаçу. Куна эпĕ тупа тусах çирĕплетме хатĕр.

Калаçнăçемĕн Борисăн тарăхăвĕ сĕвĕрĕлсе пычĕ. Юлашкинчен вăл хĕре вĕрентсе каларĕ: «Рая, ку юлашки хут пултăр, çав чее Катрамова урăх хăв патна çывăха та ан яр».

Икĕ чун, икĕ юратнă чĕре, ку хутĕнче пăтранса уйрăлчĕ. Уйрăлнă чух Рая хурланчĕ, унăн куçĕпчен, шăпăр-

татса, куççуль тумламӗсем юхса анчӗç, вӑл вӗсене алтутрипе шӑла-шӑла илчӗ.

— Лӑплан, Рая, çынсем умӗнче аван мар. Çитет. Чарӑн,— терӗ ӑна Борис.— Ну, лайӑх юл, Рая.— Хӗрӗн икӗ хура шӑрçа пек куçӗнчен тинкерчӗ вӑл. Рая та хӑй куçне илмерӗ.

— Çук, эсӗ мана шанмастӑн,— терӗ вӑл.— Ман мӗн калас сана: чӑнлӑх хӑш енчине пуласлӑх кӑтартӗ. Урӑх нимӗн те хушма пултараймастӑп. Сывӑ пул, Борис. Сана çартан тӗрӗс-тӗкел çаврӑнса килессе шанатӑп.

Хӗр каччӑ енне аллине тӑсрӗ, икӗ çамрӑк алӑ пӗр-пӗрне хытӑ чӑмӑртарӗç.

— Сывӑ юл, таса пурӑн, Рая,— пулчӗç юлашки сӑмахӗсем каччӑн.

Вӗсем уйрӑлчӗç. Рая чылайччен алтутрипе сулса тӑчӗ. Унтан вара вӗсем пӗр-пӗринпе хирӗç тӑрса каласман. Пӗр-пӗрин патне çыру çӳретнӗ кӑна. Çырусенче нимӗнле иккӗленӳллӗ туйӑмпа çырнӑ сӑмахсем те пулман. Халӗ çак ӑнсӑртран тӗл пулнӑ çын каланӑ сӑмахсем Бориса пӗтӗмпех пӑтраштарса ячӗç. Ӑна чугун çулӑн икӗ енӗпе ӳсекен вӑрман та хавхалантараймарӗ, кӑтра хурӑнсемпе çӑкасем те чуна çӗклекен туйӑм чӗртеймерӗç.

Вӑл Райӑпа Леонид çинчен кӗвӗçсе шухӑшлать. «Хӗрӗн уйрӑлнӑ чух каланӑ сӑмахӗсем ултавлӑ пулнӑ иккен. Вӗсене вӑл мана лӑплантарма каланӑ-мӗн. Ултавлӑ, пуш сӑмахсем. Мӗншӗн-ха тата манпа тӑтӑшах çыру çӳретрӗ? Апла вӑл пӗр вӑхӑтрах ик мулкача тытма шутланӑ. Апла пулсан, лешӗ, Катрамовӗ, ӑна улталаса хӑварма пултарать.»

Борис шухӑшласа пынипе сисмерӗ те — вунӑ сехет тӗлнелле пуйӑс Канаша çитсе чарӑнчӗ.

Борис хӑпӑл-хапӑл пуçтарӑнчӗ те ытти пассажирсенчен малтан перрон çине анчӗ. Вокзала кӗчӗ. Шупашкара каякан пуйӑс кӑнтӑрла иртсен икӗ сехетре пулмалла. Унччен кӗтесси Борисшӑн нумай пек туйӑнчӗ. Вӑл машинӑсем шырама тытӑнчӗ. Анчах вокзал таврашӗнче пӗр

машина та курăнмарĕ. Сехет ытла шыранă хыççăн ăна пĕтĕмпех паллă пулчĕ: колхоз грузовикĕсене те вăрçă валли илнĕ, халĕ пĕтĕм ĕçе лашапа тăваççĕ. «Пĕр-пĕр лав тупма пулмĕ-ши?»

Юлашкинчен пĕр çар çынни военкомата кайма хушрĕ. Вĕсен машина пур, час-часах Шупашкара çӳреççĕ, сана, фронтовика, илсе кайма тивĕç, терĕ.

Чăнах та, военкоматра чиперех ĕç тухрĕ.

Кăнтăрла иртсен, вĕсем Шупашкара çитрĕç. Хула хĕрринчех педагогика институчĕн çурчĕ. Анчах ун умне халĕ темшĕн çӳллĕ карта тытнă. Çĕнĕрен тунă çуртăн мăрйи тĕтĕм кăларса ларать, хура, çăра та çӳллĕ тĕтĕм. Ĕлĕк институт территорине кĕме нименле алăк та пулман, халĕ чултан тунă пысăк алăк. Тата ун умĕнче халăх хĕвĕшет. Нумайăшĕ хура спецовка тăхăннă. Хастаров тӳсеймерĕ, водительтен ыйтрĕ:

— Кунта мĕн вара? Институт мар-и?

— Эсĕ, юлташăм, нумай кая юлнă. Халĕ кунта Харьковран куçса килнĕ завод. Электрица аппарачĕсем тăвакан завод, вăл иртнĕ кĕркуннех кунта куçса килчĕ, рабочисемпе инженерĕсем те унтанах, халĕ вырăнти çынсене унта ĕçе илеççĕ.

— Педагогика институчĕ ăçта вара? — пĕлесшĕн пулчĕ Хастаров.

— Ăна Сĕнтĕрвăррине куçарнă.

Тепĕр çур сехетрен Хастаров Рая пурăнакан Урицкий урамне васкарĕ.

Борис чи малтан хваттерте Рая çинчен пĕлесшĕн пулчĕ: вăл чăнах çав Катрамова качча тухма хатĕрленет-и, Катрамов кунти хваттере килсе çӳрет-и е пĕтĕмпех суя сăмах? «Вутсăр тĕтĕм пулакан мар. Калаçаççĕ пулсан, мĕн те пулин пурах».

Борис çенĕк алăкне уçма тăчĕ, анчах ăна шалтан çаклатнă. Борис алăка шаккарĕ те, кăшт тăхтасан, çенĕке тахăшĕ тухрĕ.

— Кам унта? — илтĕнчĕ ватăрах хĕрарăм сасси.

— Мала эсир пӗлместӗр-ха. Рая Михайлова ҫакӑнта пурӑнать-и?

— Ҫакӑнта, анчах халӗ ӗҫре вӑл. Эсир кам пулатӑр? Тӑванӗ-и, тусӗ-и? — пӗлме васкарӗ хайхи хӗрарӑм.

— Тусӗ,— терӗ Борис, пӗр пытармасӑр.

— Апла иккен,— терӗ те ҫенӗк алӑкне уҫрӗ хӗрарӑм.— Эсир ҫарти-и? — тесе, Борис умне утмӑлсене ҫитнӗ ватӑрах хӗрарӑм тухса тӑчӗ.

Ун ҫийӗнче кӑвак ҫитсӑ платье, хура саппун, пичӗ пӗрмекленнӗ, шупка кӑвак куҫӗсем ют ҫын ҫине сӑнаса тинкереҫҫӗ. Ҫар ҫыннин, лейтенантӑн, сулахай янахӗ ҫӗвӗклӗ. Ҫак паллӑсенчен хӗрарӑм хӑй умӗнче фронт витӗр тухса килнӗ ҫын пулнине чухларӗ. Вӑл Рая пирки темскер каласшӑнччӗ, анчах вӑхӑтра тавҫӑрса илчӗ: фронтра пулнӑ ҫынна тӳрех пурне те калама юрамасть.

— Рая... Кӑнтӑрла иртни пилӗк-ултӑ сехетсӗр те таврӑнмасть. Вӗсен ӗҫӗ нумай. Кашни фронтовика сыватас пулать.

Унтан хӗрарӑм ун-кун ҫинчен ыйтса тӗпчеме тытӑнчӗ. Борис хапӑлах каласа кӑтартрӗ.

— Пӳрте кӗрӗр, мӗн кунта ура ҫинче тӑратпӑр,— тесе чӗнчӗ Нина Васильевна юлашкинчен.

— Васкатӑп, инке, ман ӑна курса калаҫас килет, тӗл пулманни икӗ ҫул ҫитет ӗнтӗ. Унтанпа чылай улшӑнусем пулчӗҫ пуль.

— Эсир унпа чылай хушӑ туслӑ-и?

— Ҫара кайиччен пӗр ҫул туслӑ пулнӑ. Халӗ тата икӗ ҫул иртрӗ. Анчах унӑн хальхи пурнӑҫне эсир ытларах куратӑр — эпӗ аякра, ҫыру урлӑ ҫеҫ чухлакалатӑп,— иккӗленерех каларӗ Борис.

— Ку тӗрӗсех ӗнтӗ. Анчах ӑҫтан пурне те пӗлетӗн. Ҫын чунӗ — вӑрман.

Нина Васильевна ытарлӑ калаҫни Бориса шухӑша ячӗ.

— Калӑр-ха, Нина Васильевна, сирӗн пата Леонид Катрамов ятлӑ ҫын кӗрсе тухман-и? Вӑл ман юлташ — ун ҫинчен пӗлес килчӗ,— вӑлтса ыйтма пуҫларӗ Борис.

Хĕрарăм пĕр авăк шăпах тăчĕ.

— Леонид ятлă тетĕр-и? Вăл çартан килнĕскер-и?

— Çук, хальхи вăхăтра Чăваш çĕршывĕнчех пурăнать. Юлашки вăхăтра ăçта ĕçленине пĕлместĕп, малтан Хĕрлĕ Чутайраччĕ.

— А-а, ăнлантăм. Хайхи япшар та таса тумланса çӳрекенни, кĕрсе тухкаланă, вăл пĕр-икĕ хутчен Рая валли шурă çăнăх, какай илсе килнĕччĕ. Анчах Рая ăна илесшĕн пулманччĕ, эпĕ ăна каласа ӳкĕтлерĕм. Парнерен пăрăнаççĕ-и вара? Вара вăл килĕшенçи пулчĕ.

Ку сăмахсене илтсен, Борисăн чĕри мăка çĕçĕпе каснă пек ыратма тытăнчĕ.

— Эпĕ кайрантарах килетĕп-ха. Халь госпитале Рая патне каятăп,— терĕ вара Борис.

— Апла та юрать. Анчах çакна асăрхаттарасшăн: Рая хăй патне госпитале пыракан çынсене кăмăлламасть. Мана та асăрхаттарчĕ: «Тархасшăн, ман пата госпитале никама та ан яр, адрес та ан пар — госпиталь начальникĕ вăрçать»,— тет. Çавăнпа та эсир вăл ĕçрен тухиччен хула курса çӳрĕр е кунтах канăр.

— Тавах сире, Нина Васильевна, асăрхаттарнăшăн. Госпиталь йĕркине хам та чухлатăп,— тесе, Борис Хастаров урама тухрĕ.

Хулана тухсан, вăл чылай вырăна пăхса çӳрерĕ. Хула малтанхи пекех, анчах çар çыннисем йышлă. Вĕсене Атăл хĕрринче курма пулать, аслă шыв леш енче те, йăлăмра та пайтах.

Вăхăт малаллах шăвать. Борис сисмерĕ те — кăнтăрла иртни ултă сехет çурă çитнĕ. Ăна тапранма вăхăт. Вунă минут та иртмерĕ, вăл каллех Рая пурăнакан хваттере çитсе тухрĕ. Вăл урамри чӳречеренех пӳртре арçынсем ларнине курах кайрĕ.

Хальхинче пӳртум алăкĕ уçă пирки тӳрех хваттере çитсе кĕчĕ.

Залра сĕтел хушшинче Катрамовпа палламан икĕ арçын лараççĕ. Вĕсене Нина Васильевна тăрăшсах сăйлать.

Сĕтел çинче икĕ тулли эрех кĕленчи, виççĕмĕш çурри пушаннă. Кашнин умĕнче винегрет, сĕтел варринче, пысăк çатма çинче, ашпа пĕçернĕ шаркку, унпа юнашар шурă турилккере тăварланă шурă купăста, ăна вакласа хунă, тепĕр турилккере — тăварланă хăяр. Кашнин умĕнчех сакăрвунă грамм кĕрекен çаврака черккесем, вĕсен хĕррине икĕ рет ылтăнласа ункă çавăрнă.

Катрамов хăйăр тĕслĕ çĕнĕ костюмпа, чăлт-шурă кĕпи çийĕн хура галстук çакнă. Хура çӳçне икĕ еннелле уйăрса туранă. Унăн хура куçĕсем Хастаров çине сиввĕн пăхаççĕ.

Тăрăхла сĕтелĕн сылтăм енче икĕ çамрăк: пĕри — кĕпе вĕççĕнех, тепри — кăвак костюмпа. Кăвак костюм тăхăннин куçĕ хăйĕн костюмĕ тĕслĕ. Кĕпе вĕççĕн лараканни сарлака та патвар кĕлетке-çурăмлă.

Хастаров вĕсем патне зала иртрĕ. Катрамов ура çине яштах сиксе тăчĕ.

— Эсĕ Хастаров пултăн-и çав? Мĕнле майпа кунта килсе тухрăн? — сасартăк тĕлли-паллисĕр ыйта пуçларĕ вăл. Сĕтел хушшинчен тухса, Борис енне темиçе утăм турĕ те аллине тăсрĕ, анчах Хастаров ăна алă тытмарĕ.

— Эсĕ, Борис, каллех харкашасшăн-им? Каллех кунта хирĕçме килтĕн-им? — терĕ Катрамов, хаярланса.

— Çапăçма мар, сирĕнпе калаçма та мар — хам ĕçпе килтĕм,— хуравларĕ Хастаров.

— Леонид, мĕншĕн çапăçасшăн вăл санпа, мĕн пирки? — хута кĕрсе ыйтрĕ патмар кĕлеткелли. Эрех ĕçсе хĕрнĕскер, вăл та ура çине ялтах тăчĕ.

— Эпĕ сирĕн пата килмен, Рая патне,— терĕ Борис хăюллăн.

— А-а, апла, эппин, халĕ те çав Рая çинчен шухăшлама пăрахман-и? Тен, сана ун çинчен пĕтĕмпех манмалла тумалла? Мĕнле, юлташăмсем? Эсир хатĕр-и?

Хальхинче кăвак костюм тăхăнни те сиксе тăчĕ.

— Тăна илмесен — пĕрре хутла вĕрентер, — терĕ те патвар кĕлеткелли, Хастаров патне çитсе тăчĕ.

Нина Васильевна, çапăçу пулассине туйса илнĕскер, Хастаровпа Катрамов хушшине пырса тăчĕ.

— Çамрăксем, ман патра çапăçма юрамасть. Çапăçма памастăп. Хирĕçме чарăнăр. Астăвăр: вăл фронтовик тата аманнăскер. Ăна хĕнесен, Рая çинчен сирĕн, Леонид, шухăшлама пăрахмалла пулать.

— Çапла, тĕрĕс, Нина Васильевна, анчах эпир çапăçмастпăр, халлĕхе эпир ăшшăн калаçатпăр кăна,— йăпатма тăрăшрĕ Катрамов.

— Çапах та лейтенанта кунтан тухса кайма ыйтатпăр,— терĕ çутамми.— Унсăрăн кунта канăç пулас çук. Эсир мĕнле? — Катрамовран ыйтрĕ вăл, Хастаров çине шур куçĕпе пăхса.

— Эпĕ те çапла шутлатăп. Майлă чух тухса шăвăнха, Хастаров юлташ! — терĕ Катрамов шăл витĕр.— Урăх эсĕ Райăна ан çулăх, вăл кĕçех ман арăм пулмалла.

— Катрамов юлташ, ку сан шухăшу-и е хĕрпех калаçса татăлнă? — хĕрсе кайса ыйтрĕ Борис.

— Ку сан ĕç мар. Ман санпа урăх сăмахăм çук.

— Тепре калатăп: кунтан халех тухса сирпĕн, ахалех алăсем ытла та хыт кĕçтеççĕ,— терĕ те сарлака çурăмли каллех Борис патнелле ярса пусрĕ, анчах ăна Катрамов каялла туртрĕ.

Нина Васильевна каллех чупса пычĕ.

— Эсĕ кунтан тухса кай-ха, Борис. Çапăçу пулĕ.

Борис ăнланчĕ: вĕсем, ĕçсе хĕрнĕскерсем, тем тума та пултарĕç.

Вăл вăшт çаврăнчĕ те пӳртрен тухса утрĕ.

Борис Рая патне госпитале васкарĕ. Госпиталь патне çитсе пыратчĕ, унтан Рая тухрĕ. Вăл васкаса пусма тăрăх анчĕ. Çийĕнче мăкăнь чечекĕ тĕслĕ платье. Сарă çӳçĕ утнă май вĕл-вĕл туса хускалать. Вăл, пусма çинчен анса çитсен, тротуарпа утма пикенчĕ те Бориса курах кайрĕ. Тӳрех ун патне ыткăнчĕ. Борис темиçе утăм ярса пусма ĕлкĕрчĕ — хĕр ун хулпуççи çине пырса усăнчĕ.

— Тусăм, Боря, мĕнле майпа çитрĕн? Мĕнле майпа?

Ёненме те пултараймастăп! Ёненме те май çук! Мĕншĕн килесси çинчен пачах пĕлтермерĕн?

— Рая, сан пата васкарăм. Ниçта чарăнса тăмасăр, хĕвел пайăрки пек, ракета пек тӳррĕн çиçсе килтĕм. Анчах кунта çанталăк сив пăрпа витĕннĕ иккен! Ман çунатăмсем кĕçех пăрпа хупланмарĕç.

— Пит аван, Борис! Эсĕ килнĕшĕн тем пекех хавас. Анчах сан сăмахусене ниепле те ăнланаймарăм: мĕнле пăр çинчен калаçатăн? Кам кӳрентерчĕ? Мĕнле усал хыпар е элек пулчĕ? — тĕлĕнсе кайса калаçрĕ Рая.

— Юрать, Рая, ун çинчен кайран. Ху мĕнле пурăнатăн? Ёçӳсем мĕнле? — унăн кăвак куçĕнчен шăтарасла пăхса ыйтать Борис. Рая ăнланчĕ: каччă темĕн пĕлесшĕн. Анчах та вăл лăпкăн хуравларĕ.

— Хĕрӳ ĕçре иртеççĕ кунсем. Çурхи шыв пек кĕрлет, шавлать пурнăç. Кашни кун аманнисене сиплетпĕр, вĕсене ура çине тăратасшăн ырми-канми кĕрешетпĕр. Ялан ĕçре.

Вĕсем калаçа-калаçа Ленинградски урампа аналалла утрĕç. Рая хăйсен урамĕ еннелле пăрăнасшăнччĕ, анчах Борис ăна хулран тытрĕ.

— Çук, сирĕн пата каймастпăр. Унта халь Ашапатман килнĕ, пĕччен мар, тарçисемпе.

— Кам унта? Эсĕ пултăн-и? — тĕлĕнчĕ хĕр.

— Ахальтен каламастăп, Рая. Эпĕ аран-аран ун тыткăнĕнчен хăтăлса тухрăм — урăх ман унта ĕç çук.

Ытарлă калаçнă пулсан та, Рая ăнланчĕ.

Хастаров Райăна хăй патне хăна çуртне кĕме сĕнчĕ. Борис хĕре хăй вырнаçнă пӳлĕме, иккĕмĕш хута, илсе хăпарчĕ.

Икĕ çывăх тус, виçĕ кравать ларакан пĕчĕк пӳлĕме кĕрсен, хăйсене хăйсем тата çывăх туйрĕç. Борис Райăна пукан çине ларма сĕнчĕ. Хăй те юнашар тепĕр пукан çине ларчĕ.

Хастаров Катрамов çинчен илтнĕ хыпара Райăна каласа пачĕ.

— Мӗнле путсӗр пулнӑ иккен вӑл,— терӗ Рая.— Кӗҫҫепит. Йӗркеллӗ каччӑ пек мана ҫулӑхать. Эп ӑна нихҫан та хам ҫума ярас ҫук. Тӗл пулсан та, урӑх сӑмах хушмастӑп. Вӑл тилӗ пек чее, аҫтаха пек хӑрушӑ, юнсӗс пек ӗмӗтсӗр! Урӑх ун ҫинчен калаҫса вӑхӑта та, ҫӑвар тутине те сая ярас мар!

Вӗсем хӑйсен пурнӑҫӗ ҫинчен чылай ӑшшӑн калаҫрӗҫ. Рая каччӑ ҫумне йӑпшӑнчӗ, вӑл эйпекленсе ачашланма пуҫларӗ. Унӑн кӑвак куҫӗ ӑшшӑн кулса илчӗ. Борис хӗрӗн тӑрӑ та тарӑн куҫӗ хӗлхем сапса пӑхнинченех ӑнланчӗ: Рая ӑна юратать, кун пирки ним иккӗленмелли те ҫук. Вӑл уншӑн тунсӑхланӑ. Халӗ хӗрӗн артаклӑхӗ ун чӗринче теветкел хӗрӳ туйӑма ҫулӑмлантарчӗ.

Борис тусӗ ҫине ытарайми савса пӑхрӗ. Рая тата хытӑрах ун ҫумне йӑпшӑнчӗ. Унӑн вӗри ӳчӗ каччӑн ӳт-пӗвне вӗрилентерсе ячӗ. Борис хӑй сисмесӗрех Райӑна ыталаса илчӗ.

Тепӗр ик сехетрен икӗ тус хӑна ҫуртӗнчен тухрӗҫ те Хӗрлӗ площадь урлӑ Атӑл хӗрнелле ҫул тытрӗҫ. Утнӑ май Борис Райӑна фронтри ӗҫсем ҫинчен каласа кӑтартрӗ, хӗр унӑн кашни сӑмахне тимлесе итлерӗ.

Райӑпа Борис Атӑл хӗррине ҫитрӗҫ. Кунта ҫамрӑксем татти-сыпписӗр хӗвӗшеҫҫӗ, пӗрисем бульварпа тӑвалла «Юрату сӑмсахӗ» еннелле улӑхаҫҫӗ, теприсем каялла анаҫҫӗ. Кашни ушкӑнӑнах хӑйӗн калаҫӑвӗ, хӑйӗн савӑнӑҫӗ, хӑйӗн хумханӑвӗ...

Бориспа Рая «Юрату сӑмсахне» ҫитиех улӑхрӗҫ.

Вӗсем умӗнче ытараймн Атӑл сарӑлса выртать. Шыв нумай тулнипе ун таппи Сосновка поселокӗ патне ҫитет. Вилӗ Атӑлпа ҫӗнӗ Атӑл хушшинчи вырӑнсем утрав пек курӑнаҫҫӗ. Каҫӑ тӗлӗнче, тепӗр енче, темиҫе киле пӗтӗмпех шыв илнӗ, ҫурт ҫийӗсем кӑна курӑнаҫҫӗ. Каҫӑран инҫех мар — пысӑк тирексем. Йӑлӑмри ҫӳҫе вӑрманӗ пӗтӗмпех шывра.

Борис Хастаров студент чухне Атӑл леш енче сахал мар шыва кӗнӗччӗ, шывран тухнӑ хыҫҫӑн вӗри сар хӑйӑр

çинче килениччен пиçĕхсе вылтнăччĕ. Халĕ çав савăнăçлă выртнсем пĕтĕмпех шывра.

Рая та пысăк шыв çине куçпа тăранаймн пăхса тăчĕ.

— Чуна уçакан, чуна çĕклекен Атăл! Ун патне тухатăн та, темле йывăр хуйхă та сирĕлсе каять. Эпĕ йывăр вăхăтсенче яланах кунта тухатăп, унăн уçă сывлăшĕпе сывлатăп, лăпкă та çепĕç сассипе чуна лăплантаратăп. Кăçал пăр кайнă вăхăтра пирĕн госпитале йывăр аманнă танкиста илсе килчĕç. Унăн пиçсе кайнă вырăнĕсене марганцовкăпа йĕпетсе тăтăмăр, спиртпа та çурăмăр, Вишневский маçне те сĕртĕмĕр, парафинпа та çыхрăмăр, анчах пурĕпĕр çăлса хăвараймарăмăр. Вăл ман дежурство вăхăтĕнче вилчĕ. Хăй çирĕм çулта кăна. Урал каччи. Сарлака кăкăрлă, яштака çамрăк. «Сестра,— тет, ман еннелле пăхса.— Мана халĕ хĕрсем юратма пултараççĕ-ши? Эпĕ халь медуза пек сăнсăр вĕт. Анчах эсĕ, сестрица, пĕр пытармасăр кала. Эпĕ сана ĕненетĕп». Эпĕ унăн хĕп-хĕрлĕ ашланнă, вырăн-вырăн хăмпăланса тăракан пичĕ çине пăхатăп та, хĕрхеннипе йĕрсе ярас килет. Хам туйăма палăртмасăр, чуна хытарса, ăна лăплантарма тăрăшатăп. «Виталий, уншăн пĕрре те ан шиклен, чунна та ан ват. Ак сывалатăн та, сана, ăмăрткайăка, темле хĕр те юратĕ...» — «Çĕвĕксем юлаççĕ пуль, хĕрлĕ çĕвĕксем?» — кăмăлсăррăн ыйтать вăл. «Кăштах юлаççĕ, анчах ытла паллă пулмаççĕ вĕсем. Пудра сĕретĕн тата... Юратнă хĕрӳ те сисеймĕ».— «Çук, Роза теме те асăрхĕ: ытла вичкĕн куçлă. Хăй чечек пекех хитре, чипер. Манран сивĕнет пуль ĕнтĕ».— «Чăн-чăнах юратать пулсан, сивĕнмест. Эсĕ юлташпа çапăçса мар, тискер тăшманпа çапăçса сывлăхна хавшатнă. Çакна ăнланакан хĕр нихçан та хăй тусне пăрахмасть. Ман тусăм та фронтра. Эпĕ ăна кирек мĕнле амансан та пăрахассăм çук...» Юлашкинчен вăл Роза патне çыру çыртарчĕ. «Роза, юратнă тусăм! Эпĕ сана яланах чĕрере упрăп. Сан юратăву манра паттăрлăх, харсăрлăх çуратать...» Çыру çырса пĕтерне хыççăн: канатăп халь, терĕ те часах тăнне çухатрĕ. Эпĕ врача чĕнсе пытăм.

Уколсем турăмăр. Анчах ăна вилĕм аллинчен хăтараймарăмăр... Вăл чĕри тапма пăрахиччен кăвак куçĕсене уçрĕ, ик куç тулли кĕмĕл пек куççулĕ тухрĕ, пит тăрăх юхса анчĕ... Чун кӳтсе килнипе эпĕ çакăнта, аслă шыв патне, килтĕм, унтан, тусăм, сана аса илтĕм. Ик-виç сехет хушши мăнаçлă шыв çине пăхса лартăм, сăнарăм. Аслă шыв сывлăшĕпе чун уçăлса пычĕ, чĕрене хĕсни иртсе лăпланчĕ.

Хĕрĕн вĕри хулĕнчен Бориса ăшă çапрĕ. Бориса тусĕ калаçни, унăн вĕри чунĕ хаваслантарчĕ. Хĕр чĕри те савăнăçлăн тапрĕ. Вĕсем, икĕ юратнă тус, каллех, юмахри пек, кĕтмен çĕртен пĕрле. Паттăр тусĕ, хаяр вăрçă витĕр шăранса тухса, ун патне каллех вĕçсе çитрĕ. Тен, ăна вĕсен пысăк юратăвĕ сĕмсĕр вилĕмрен упраса хăварчĕ?

— Боря, эсĕ çав тĕпчев институтне кĕрсе тухрăм терĕн, хăвна çавăнта ĕçлеме хăварсан, килĕшнĕ пулăттăн-и? — пĕлес тĕллевпе ыйтрĕ хĕр.

— Вăрçă хыççăн — паллах. Халĕ, Рая, ун пирки калаçни вырăнсăр. Ăна ху та ăнланатăн. Тăшмана çапса çĕмĕрмесĕр, тĕп тумасăр чарăнма пултараймастпăр, тусăм. Эпĕ сана ăнлантăм. Ку ыйту — пирĕн юратуран пысăк. Вăл пирĕн чăн-чăн çирĕп юратушăн, ирĕклĕ юратушăн пулĕ.

— Ăнлантăм сана, Боря. Пурте тĕрĕсех. Анчах манăн сана тем пек сывă хăварас килет, тем пекех... Çавăншăн кăна... Саншăн питĕ тунсăхларăм, ытла та... Чĕре те пĕр сана çеç туять, сана кĕтет.

Рая Борисăн хулĕнчен тытрĕ, вĕсем Атăл хĕрринчи лаштра йăмра айне кайса ларчĕç. Унта вĕсем шуçăм çапичченех ăшшăн калаçса ларчĕç... Вĕсен хĕрӳллĕ юратăвне ватă йăмрапа сарă уйăх кăна сăнарĕ...

Борис эрне хушши хулара пурăнчĕ. Кашни кун, кашни каç Райăпа тĕл пулчĕ. Вĕсем тата çывăхланчĕç, пĕрпĕрне куçран пăхнипех пĕлекен, сисекен пулчĕç.

Рая хальхинче пĕтĕм чун-чĕрипе Бориса юратса пăрахрĕ, вăл ĕçре те малтанхи пек тытăнса тăмарĕ. Темиçе

хутчен дежурство каçхине хăй вырăнне юлташ сестрасене хăварчĕ — яланах, кашни минутрах Бориспа пулма тă-рăшрĕ.

Пĕр ирхине Рая Бориса килне ăсатса ячĕ.

Çичĕ сехетре чей ĕçнĕ хыççăн вĕсем Мускав урамĕпе кирпĕч завочĕ тĕлне çити хăпарчĕç. Рая каччăн шинельне çĕклесе пычĕ, Борис — хăйĕн сарă чăматанне.

Бензоколонка тĕлĕнче вĕсене пĕр грузовик хăваласа çитрĕ. Борис çавăнтах алă çĕклерĕ. Ватăрах шофер, çар çыннине курсан, машинине тăратрĕ.

Борис Рая патне ыткăнчĕ.

— Ну, тусăм, вăхăтлăха уйрăлатпăр. Машина та тупăнчĕ. Лайăх юл, Рая, ан тунсăхла.

Вăл хĕре çупăрласа илчĕ, Рая та хăйĕн çĕкленсе тă-ракан кăкăрĕпе каччă çумне çыпçăнчĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне сăнаса куçран пăхрĕç.

☆

## ТУПМАЛЛИ

Снайпер калавӗсем 3
Пӗр куҫ хупмасӑр 13
Пӗрремӗш «куккук» 21
Ҫӗмӗрт ҫеҫки ҫурӑлсан 29

*Для старшего школьного возраста*

Юшков Сергей Павлович

НЕ СМЫКАЯ ГЛАЗ

Рассказы

На чувашском языке

Редактор **М. П. Егоров**
Художник **В. Н. Гончаров**
Художественный редактор **А. А. Афиногенов**
Технический редактор **Г. С. Самсонова**
Корректор **Л. А. Иванова**

Сдано в набор 3/VIII-1978 г. Подписано к печати 12/X-1978 г. НТ 18773. Формат 70×108/32. Физ. печ. л. 1,5. Усл. печ. л. 2,10. Уч.-изд. л. 2,03. Бумага типографская № 3. Заказ № 3240. Тираж 5000 экз. Цена 5 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

5 пус

Чӑваш кӗнеке издательстви, 1978